К65.6
А23
Ч-47466

ÇИЧĔÇУЛЛĂХ ÇЫННИСЕМ



Л. Агаков

# ЛАЙĂХ ÇЫНСЕМ ÇИНЧЕН

Национальная библиотека ЧР
4-047466
...ЖНА БЫТЬ
...А НЕ ПОЗЖЕ
...ДЕСЬ СРОКА

К65.6
А23

Леонид Агаков

# ЛАЙĂХ ÇЫНСЕМ ÇИНЧЕН

ОЧЕРКСЕМ

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1961

65.9(2Рос.Чув),240
К65.6-640

П...ВЕРЕНО
20 07

ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

Ч-47466

Национал...
Чуваш...

## ВЁРИ ЧЁРЕ, ЫЛТĂН АЛĂСЕМ...

Канашри вагонсем юсакан заводри чи чаплă çурта—культура дворецне пырса кĕрсенех, унăн аслă та илемлĕ, япяка паркет урайлă, çӳлĕ мачча çумĕнчи капăр люстрăсем хĕвел пек çутатса таракан фойинче — малти пӳлĕмĕнче — эсир шăкăриех пысăк сăнӳкерчĕксем çакăнса тăнине куратăр та, вĕсене йĕркипе пăхса тухмасăр иртсе кайма пултараймастăр...

Пĕр стени çинче — заводри ветерансем. Вĕсем ĕнтĕ çамрăк мар, пурте тенĕ пекех 45—50 çулсене çитнĕ е унтан та иртнĕ. Урăхла пулма та пултараймасть çав,— вĕсем кунта, Канаш çĕрĕ çине, пĕрремĕш пилĕкçуллăх пуçлансанах килнĕ те, авалхи станцин пĕр хутлă пĕчĕкçеç йывăç çуртĕнчен пилĕк-ултă километрта, хĕвелтухăç енче сарăлса выртнă пушă хирте пысăк завод тума тытăннă. Ун чухне çак çынсенчен нумайăшĕн сухалĕсем шăтман

йĕкĕтсемпе ют çынна куçран пăхма хăяйман хĕрсем кăна пулнă. Ялсенчен тин кăна пынăскерсем, вĕсем нимĕнле ăсталăха та пĕлмен-ха; вĕсен шăмшаккисенче иксĕлми вăй пулнă та чĕрисенче ырми-канми ĕçлес кăмăл вĕресе тăнă çеç.

Пĕрисем састăпсемпе çĕр чавнă, ăна наçилккесемпе аяккалла йăтнă, лашасемпе йывăç, кирпĕч, чул, тимĕр турттарнă, теприсем пулас завод патнелле чугун çул юппи тунă, хăйсене пурăнма саваламан хăмасенчен бараксем майлаштарнă, виççĕмĕшсем çав вăхăтрах завод корпусĕсене купалама тытăннă.

Çапла пуçланнă вĕсен заводри пурнăçĕ. Завода вĕсем чăн-чăнах та хăйсен аллисемпе, хăйсен вăйĕпе, çан-çурăмĕсем сăрăлтататакан пуличчен ĕçлесе тунă. ĕç хыççăн каçхине бараксене таврăнсан апат çинĕ чух алăри кашăк та чĕтренĕ вĕсен, çинĕ-çимен вара тӳрех каска пек йăванса, ним пĕлми çывăрса кайнă. Кăна эпĕ те ним пысăклатмасăр калатăп, мĕншĕн тесен çав çулсенче мана çак стройкăра пулса курма тӳр килнĕччĕ. Нимĕнле механизаци те çукчĕ унта, грузовиксем те курăнсах каймастчĕç, çынсем пур йывăр ĕçсене те хăйсен вăйĕпе кăна тăватчĕç. Вăл вăхăтри строительсене хальхи экска-

ваторсемпе çĕр чавакан машинăсем, шахтоподъемниксемпе башеннăй крансем тĕлĕкре те курăнман çав! Çĕр хут йывăртарах пулнă ун чухнехи ĕç, анчах çĕршыв сăн-сăпатне тĕпрен улăштарса çĕнĕ, социализмла пурнăç тума тытăннă халăхăн хастарлăхĕ пур йывăрлăхсене те çĕнтерсе пынă...

Çав çĕнтерӳçĕсен, хисеплĕ çынсен ырă сăнĕсене эрешлĕн кăларса çакнă та ĕнтĕ культура двореценче. Завода туса пĕтерсе хута янă хыççăн вĕсем цехсене ĕçлеме куçнă, çирĕм пилĕк çул хушшинче ӳсĕм хыççăн ӳсĕм туса пынă, нумайăшĕ производство командирĕсем пулса тăнă, завода ĕçлеме пыракан çамрăксене ăсталăха вĕрентнĕ, лайăх та шанчăклă кадрсем хатĕрленĕ.

Вĕсене, çав кадрсене, хальхи вăхăтра заводăн производство программине ялан ирттерсе тултарса пыракансене, пултаруллă инженерсемпе техниксене, изобретательсемпе рационализаторсене, коммунизмла ĕç ударникĕсене, коммунизмла ĕç бригадисен членĕсемпе вĕсене ертсе пыракан бригадирсене — заводри иккĕмĕш ăрăва эпир фойери тепĕр стена çинче куратпăр. Вĕсем ĕнтĕ паянхи пысăк та хастарлă коллективăн çав тери çирĕп

шăнăрĕ, ăна ялан малалла туртакан, çӳлелле çĕклекен хăватлă вăй пулса тăраççĕ.

Виççĕмĕш стена çинче вара — чи хисеплисенчен хисеплисем, заводра нумай çулсем хушши пĕтĕм чуна парса ĕçленипе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн чаплă наградăсем — орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнисен сăнĕсем...

Вĕсем хушшинче, пĕрремĕш вырăнта, Социализмла Ĕç Геройĕ Семен Павлович Никитин сăнĕ. Унăн кăкри çинче — Ылтăн Çăлтăр, Ленин орденĕ.

Эпир ун умĕнче вăрахчен тытăнса тăратпăр. Ӳкерчĕк çинчен хурарах сăнлă, типшĕмрех питлĕ, лăпкă та сăпайлă çын пăхать. Пирĕн енчи пек каласан, ку çын пурнăçра питĕ кунĕ пулассăн туйăнать. Тем тесен те, вăл шавлама, тавлашма юратакан «йăхран» мар. Хăй тунă ĕçсемпе мухтанасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть унăн. Қайран пĕлтĕмĕр — чăнах та çавăн пек иккен. Тĕлĕнмелле сăпайлă çын çак Семен Павлович. Çав вăхăтрах ăна «лăпкă çын» тени пĕрре те тĕрĕс пулмасть. Вăл питĕ канăçсăр, лăпланма пĕлмен çын. Анчах çакна тĕрĕс ăнланас пулать: **ĕçре** канăçсăр вăл, **ĕçре** лăпланма пĕлмест, пĕрмай шырать, тĕпчет, пĕрмай ĕçе çăмăллатмалли, ăна ту-

хăçлăрах тумалли майсем çинчен шухăшлать, хăйĕн шухăшĕсене пĕрмай ĕçре тĕрĕслесе пырать те — мĕн шыранине тупать-тупатех, хăй мĕн ĕмĕтленнине тăватех.

Вăл çавăн йышши çын пулни çинчен пире пурте пĕр пекех каларĕç—заводри парти комитетĕнче те, заводăн главнăй инженерĕ те, кунти хаçатра ĕçлекенсем те, Семен Павлович хăй шухăшласа кăларса хăй аллипе тунă ĕç хатĕрĕсемпе усă куракан бригадирсем те, ахаль рабочисем те.

— Лайăх çын, çав тери ăста токарь, ывăнма пĕлмен рационализатор, ун пекки пирĕн пĕтĕм завочĕпе те урăх çук,— теççĕ вĕсем. — Ĕç Геройĕн хисеплĕ ятне тивĕçлипех панă ăна!..

* * *

Паттăрсем «пĕлĕт çинчен ӳкмеççĕ», ăнсăртран та пулса тăмаççĕ, вĕсем пирĕн халăх хушшинче, вăл пулăшнипе, аслăраххисем, пурнăçа ытларах пĕлекеннисем вĕрентнипе ӳссе çитĕнеççĕ. Вĕсен кун-çулĕ пур чухне те тап-такăр пулать теме çук, хăшĕсен умне тепĕр чух нимĕнле те çĕнтерме май çук пек туйăнакан йывăрлăхсем те тухса тăраççĕ. Вĕсене

çĕнтерме, çул çинчи тумхахсем урлă сиксе каçма вăй та нумай кирлĕ пулать,— çав вăя, хастарлăха пирĕн çынсене Коммунистсен партийĕ парать. Парти çынсене çĕклет, çунатлантарать, малалла каймалли çулсене кăтартать, вĕрентет, ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсене тултарма пулăшать. Çавăнпа та ĕнтĕ паттăрсем çинчен каласа панă чух вĕсен кун-çулĕ мĕнлерех пулни, вĕсем хăйсен чи пысăк çитĕнĕвĕсем патне епле майпа çитни çинчен асăнмасăр иртме ниепле те май килмест.

...Семен Павлович Никитинран вăл токарь ĕçне мĕнле вĕренсе пыни, епле майпа çакнашкал ăста токарь пулса тăни çинчен ыйтса пĕлме пуçласан, вăл тӳрех, ним тытăнса тăмасăрах:

— Аттерен килнĕ ку,— тет.— Атте тимĕрçĕ пулнипе, эпĕ мĕн пĕчĕкренпех тимĕр-тăмăр хушшинче ӳснĕ те тимĕртен ăна-кăна тума хăнăхса пынă...

Ашшĕ унăн чăнах та питĕ пултаракан тимĕрçĕ пулнă-мĕн. Унăн лаççинче сунталпа вĕркĕч кăна мар, токарнăй станок та пулнă, вăл ун чухнехи вăхăтшăн самаях кăткăс япаласем тума пултарнă. Ахальтен мар пĕрремĕш тĕнче вăрçине кайсан та, граждан вăрçи вăхăтĕнче те вăл фронтра хĕçпăшал юсакан мастер

пулса ĕçленĕ... Пулаççĕ вĕт-ха халăх хушшинче çавăн пек хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ ăстаçăсем, тем тума та пултаракан ылтăн алăллă çынсем! Семен ашшĕ Павел Иванович — шăпах çавăн пекки-сенчен пĕри пулнă: тимĕрçĕ те пулнă вăл, столяра та пултарнă, кăмакасем те хитре купаланă. Семен Павлович кăмăллăн кулса каласа парать:

— Аттен виçĕ ывăл пулнă, вĕсене вăл, пурлăх вырăнне, кашнинех хăйĕн пĕрер специальноçне парса хăварнă: аслине кăмака тума вĕрентнĕ, мана, вăталăхне, слесарь-токарь пулма, чăн кĕçĕннине — столяр ĕçне хăнăхтарнă. Аттерен пире çавăн пек «капитал» çеç юлнă, анчах уншăн эпир пĕрре те кӳренместпĕр...

— Ачисене ăсталăха вĕрентни, чăн-чăн ĕççыннисем пулма хăнăхтарни вăл — хальхи вăхăтра чи пуян наследство пуль? — тетпĕр эпир.

— Эпĕ хам та çапла шутлатăп çав,— килĕшет Семен Павлович. — Çын пĕр-пĕр ĕçе лайăх вĕренсе, пурнăçра пĕтĕм вăйне çав ĕçе панине нимĕн те çитмест...

Ялта пурăннă чухнех, саккăр-тăххăр-тах Семен пуринчен ытла токарнăй ста-нока юратса пăрахнă, кӳршĕ хĕрачисем валли пит хитре йĕкесем касса кăларнă,

хăй ăссĕн тума тытăннă йывăç велосипед «деталĕсене» майланă. Ашшĕ ăна чарман, ывăлĕ ĕçе юратнăшăн савăннă кăна, анчах ĕçлемелли хатĕр-хĕтĕрсене пăсса пăрахсан е çĕмĕрсен хĕрхенсех тăман вара — самаях хытă лектернĕ.

— Тен, çавăнпах та-и, эпĕ кайран та инструментсене питĕ юратса, тирпейлĕ тыткалакан пултăм,— кулса илет Семен Павлович,— атте шкулĕ усăллă пулнă пулмалла...

Вăтăр тăваттăмĕш çулта Тутар республикинчи Чĕркĕн ялĕнчи колхоз тимĕрçи Павел Иванович Никитин хăйĕн вунвиçĕ çулхи вăталăх ывăлĕпе, Çеменпе, Канаша килсе çитнĕ — виçĕ кун ытла çуран утнă вĕсем. Вагонсем юсакан завод пулман-ха ун чух, ăна тин çеç тунă, тимĕрçĕ валли майлă ĕçех тупăнман, çавăнпа та вăл малтанлăха депона вырнаçнă. Çулталăкран Никитинсен пĕтĕм килйышĕ куçса килнĕ, ашшĕ заводра слесарь-инструментальщик пулса тăнă. Çул хыççăн çул иртнĕ, Çемен шкулта вĕреннĕ, анчах саккăрмĕш класс хыççăн тек вĕренме май килмен.

— Завода пыратăн пуль, ывăлăм, ĕçе хăнăхса юл хам пур чухне,— тенĕ ватăлма пуçланă ашшĕ.

Вара вунҫиччӗ ҫине тин ҫеҫ пуснӑ Ҫеменшӗн урӑхла «университетсем» пуҫланнӑ. Малтан вӑл ашшӗне пулӑшаканни, «слесарь подручнӑйӗ» пулнӑ, анчах хӑй мӑннисемпе танах ӗҫленӗ. Ҫулталӑк хушшинче Ҫемен лайӑх слесарех пулса тӑнӑ та, ӑна хӑй тӗллӗн ӗҫлеме, пневматически (сывлӑш пуснипе ӗҫлекен) инструментсем юсанӑ ҫӗре куҫарнӑ. Ку ӗҫ самаях кӑткӑс пулнӑ, ҫавӑнпа та, ватӑ мастерсенчен вӗренсе пынисӗр пуҫне, кӗнекесем вулама тивнӗ, унсӑрӑн ниепле те май килмен.

— Техникӑлла кӗнекесене юратасси, вӗсене пухса пырасси ҫавӑн чух пуҫланса кайрӗ те манӑн,—аса илет халь Семен Павлович.— Нумай вулаттӑм...

Тӗрлӗрен справочниксем, техникӑлла инструкцисем ҫеҫ мар пулнӑ ҫамрӑк рабочи аллинче. Вӑл тӗнчери техникӑна малалла аталантарассишӗн нумай ӗҫленӗ, паллӑ изобретательсен пурнӑҫӗсемпе интересленме тытӑннӑ — Микель Анджелопа Леонардо да Винчи, Эдиссонпа Джемс Уатт ҫинчен те, Ползуновпа Попов* ҫинчен те кӗнекесем тупа-тупа вуланӑ. Шӑп

---

* Италире, Англире тата Российӑра тӗрлӗ ӗмӗрсенче пурӑннӑ чаплӑ изобретательсем

та ĕнтĕ çавсен пурнăçĕпе, вĕсен ĕçĕсемпе паллашнă хыççăн унăн чĕринче хăйĕн те çĕнĕ япаласем, çĕнĕ инструментсем, ĕçе çăмăллатмалли майсем шухăшласа тупас кăмăл çĕклене пуçланă...

Хăй куллен туса пыракан ĕç ăна çителĕксĕр пек туйăннă. Мĕншĕн-ха унăн слесарь кăна пулмалла? Заводра темĕн тĕрлĕ специальноçсене те вĕренме пулать вĕт-ха! Халĕ, çамрăк чух вĕренсе юлмасан, хăçан вĕренес-ха тата?

Завод вăрăммăн кăшкăртса, смена пĕтни çинчен пĕлтерет. Çынсем васкасах аллисене, пит-куçне çăваççĕ, çи-пуçĕсене тирпейлеççĕ те васкасах килĕсене тухса каяççĕ, анчах вунсакăр çулхи Семен Никитин цехрах юлать те токарь ĕçне вĕренет. Тимлĕн, çине тăрса, вăйне те, вăхăта та шеллемесĕр вĕренет... Ăнланма май пуррине хăех «çĕнтерсе илет», йывăртарах пулсан — опытлă рабочисем патне ним именмесĕрех пырса ыйтать.

— Тархасшăн, каласа пар...

Унтан, ăсталăхĕ ӳснĕ май, хăй те вĕрентме тытăнать. Пневматически инструментсемпе ĕçленĕ чух та, унтан газосварочнăй инструментсене юсанă çĕре куçсан та тăтăшах пулăшать вăл хăйĕн юлташĕсене,— унăн «ученикĕсенчен» хăшпĕри-

сем хăйĕнчен икĕ хут та аслăрах пулнă, çапах та çамрăк рабочи вĕрентнисене вĕсем хапăлласах йышăннă.

Анчах Семен Никитин çав хушăра хăй те вĕренме чарăнман. Аста токарь пулса çитсен те, вăрçă вăхăтĕнче ăна, çирĕм иккĕри каччăна, инструментальнăй цехри механически уйрăмĕн мастерĕ тусан та хăйĕн пĕлĕвĕсене тăтăшах ӳстерсе пынă вăл. Кашни пушă минутрах кĕнекесем вуланă, ĕçе лайăхлатмалли, продукци ытларах та лайăхрах туса кăлармалли майсем шыранă. Унăн вĕри чĕри нихçан та лăпланма пĕлмен...

* * *

Вăрçă вăхăтĕнче, ытти пур çĕрти пекех, заводра та йывăрлăхсем сахал мар пулнă. Ĕç хатĕрĕсем, тĕрлĕ инструментсем кивелсе нумайăшĕ юрăхсăра тухнă. Çĕннисене нихçан та илсе пырайман, çавăнпа та киввисемпех — вĕсене юсаса çĕнетсе — майлашмалла пулнă. Пневматически уйрăмра, сăмахран, пĕр вăхăтра клепальнăй мăлатуксем çитменни хăшкăлтарнă. Çав мăлатуксене ниçтан та илме çуккипе, вĕсене заводрах тума шутланă. Анчах ĕçсем ăнман, лайăх ĕçлекен мăлатуксем пулса çитеймен. Çак ĕçе

Семен Павлович хутшăннă. Çĕр çыврăмасăр шухăшланă, ун пек те, кун пек те туса пăхнă. Юлашкинчен вара тăрăшни сая кайман — çамрăк изобретатель завод валли сывлăш пуснипе ĕçлекен пит лайăх мăлатуксем тумалли май шыраса тупнă-тупнах.

Çав йывăр çулсенчех заводри литейнăй цехра, тĕрлĕрен тĕрлĕ детальсем шăратса кăларнă çĕрте, тепĕр питĕ кансĕр япала пулнă: шăратмалли формăсем тунă çĕрти тăпрапа хăйăра алă вăйĕпе, аврлă каскасемпе чыша-чыша хытарнă. Пĕр енчен, ку ĕç питĕ йывăр пулнă, тепĕр енчен тăпра пĕр пек тикĕс хытман, çавăн пирки час-часах формисем те тикĕсех пулса тухайман.

Çакна кура, Семен Павлович пысăк шухăша кайнă:

— Неушлĕ вара çынсен ĕçне çăмăллатма май çук?

Пĕр эрне ытла çĕмĕрнĕ çак шухăш унăн пуçне... «Шыракан тупатех» тенĕ пек, хальхинче те ĕç ăнăçлă пулса тухнă: вăл детальсем шăратмалли формăна пневматически майпа хытармалли мел шухăшласа кăларнă...

Малтанхи ĕçсем çавăн пек ăнни çамрăк рационализатор-изобретателе çунатлан-

тарсах янă. Тинех хайхи чăн-чăн ĕç пуçланать унăн, кăмăла тултаракан, чуна савăнтаракан ĕç!..

Çакăнтан пуçласа, унăн творчествăлла шухăшĕ хытăран хытă ĕçлеме тытăннă, вăл кашни çулах темиçешер паха сĕнӳ панă, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн ырмиканми ĕçленĕ.

Смена пĕтсен цехри юлташĕсем киле каяççĕ, анчах Семен Павлович, темиçе çул каялла токаре «вăрттăн» вĕреннĕ чухнехи пекех, пĕр пĕччен тăрса юлать те — хăйĕн станокĕ умне пĕшкĕнсе темскер виçет, шутлать, касать, мотора пĕрре ĕçлеттерет, тепре чарса лартать, унтан каллех хута ярать...

— Çемен, кил çинчен мантăн-им эсĕ? Атя, кайрăмăр!— чĕнет ăна цехра каярах юлнă рабочисенчен хăшĕ те пулин.

— Çук-ха, пĕр пĕчĕк ĕç пур...— аллипе сулса илет Никитин, станок çумĕнчен уйрăлмасăрах.

Анчах вăл тăвакан «пĕчĕк ĕçсем» пĕрре те пĕчĕк пулман, вĕсем завода, производствăна питех те пысăк усă кӳмелли ĕçсем пулнă...

Завод управленинче пире Семен Павлович тăратнă сĕнӳсен списокне туса пачĕç. Çав списокра пурĕ вăтăр сĕнĕве яхăн,

вĕсем пурте тенĕ пекех ĕçе кĕнĕ, производствăна лайăхлатма, продукци туса кăларассине хăвăртлатма, рабочисен ĕçне çăмăллатма пулăшнă, завода сахал мар усă кӳнĕ.

Никитин сĕнĕвĕсем кăткăс, техникăпа çыхăнман е ăна сахалтарах пĕлекен çынсем вĕсене ăнланма та пултараймаççĕ, çавăнпа эпир вĕсем çинче чарăнса та тăмăпăр, анчах вĕсенчен хăшпĕрисем пирки каласах килет.

Заводра вагонсене юсама хатĕрлекен цех пур. Кĕскен ăна ЦПВ теççĕ,— цех подготовки вагонов. Кивелнĕ, аманса пĕтнĕ вагонсене малтан тулта «çарамаслантараççĕ» — вĕсен йывăçран тунă пайĕсене пурне те сĕвсе илеççĕ, кузовăн тимĕр пайĕсем çеç юлаççĕ. Вара вагонăн тимĕр «скелетне» çав ЦПВ-на илсе кĕртеççĕ. Анчах çав «скелет» пайĕсем пурте тенĕ пекех кукăрălса, пăрăнса, авăнса пĕтнĕ,— вагон капитальнăй ремонта кĕриччен вунă çул хушши чупать вĕт-ха, çав хушăра вăл тем те тӳсет, тем те чăтать, çавăнпа унăн тимĕр-хурçăран тунă пайĕсем те аманса пĕтнинчен тĕлĕнмелли çук.

Çав аманнă пайсене ЦПВ-ра пурне те тӳрлетес, малтанхи виçене лартас пу-

лать — пĕр аванчăк та, нимле кукăр-макăр та ан юлтăр. Питĕ йывăр ĕç ку. Тӳрлет-ха эсĕ икĕ ывăça та кĕмен тимĕрсене!.. Анчах тӳрлетесех пулать, унсăрăн вагона юсасси пулмасть — пĕтĕм ĕç çавăнтан пуçланать.

Нумай çулсем хушши вагонсен çав аманса пĕтнĕ тимĕр пайĕсене рабочисем алă вăйĕпе, тем йывăрĕш мăн мăлатуксемпе çапа-çапа тӳрлетсе пурăннă. Нимĕнле механизаци те пулман кунта, пулассăн та туйăнман.

— Пĕр вагон пайĕсене тӳрлетсе çитериччен çитмĕл çичĕ тар юхса анатчĕ, çири кĕпесем пăрса типĕтмелле лачкам шыв пулатчĕç,— теççĕ ку цехра нумайранпа ĕçлекенсем.

Семен Павлович Никитинăн производствăри ĕçĕ çак цехпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăман. Вăл инструментсене юсакан механически цехра ĕçлет, унăн ĕçĕ — чи кăткăс инструментсене юсасси. Анчах ЦПВ-ри рабочисен ĕçĕ мĕн тери йывăр пулнине вăл лайăх пĕлнĕ. Унăн пуçĕнче вĕсен ĕçне кăшт та пулин механизацилес шухăш çуралнă.

— Çавăн пек домкрат тăвас пулать... Вагонăн аманнă, кукăрăлса пĕтнĕ çӳлти тимĕр пайĕсене мăлатуксемпе çапса мар,



И-47466

домкратпа хĕссе пырса тӳрлетмелле пултар. Анчах вăл домкрата, паллах, алă вăйĕпе пăрса çĕклемелле мар, ăна автоматла ĕçлекен тумалла...

Вăрахчен ĕçленĕ вăл çак домкрата тăвасшăн. Хăй тĕллĕнех чертежсем тунă, ĕç хыççăн цехра юлса тĕрлĕ-тĕрлĕ пайĕсене хатĕрленĕ. Вĕсем те ытла часах кирлĕ пек пулса тухман, вĕсене ун пек те, кун пек те улăштарса пăхма тӳр килнĕ. Сăмахран каласан, домкратăн пĕр пайне, «воздухораспределитель» тенине, вăл юрăхлă пулса çитиччен, Семен Павлович вунçичĕ тĕслĕ туса пăхнă. Вунçичĕ тĕслĕ! Эппин, унăн çав деталĕ вунултă хутчен ăнăçсăр пулнă, анчах ывăнма пĕлмен рационализатор çав-çавах шырама чарăнман, вунçиччĕмĕшне тунă. Мĕн чухлĕ тӳсĕм, мĕн тери çирĕп кăмăл кирлĕ çавăн пек ĕçлеме!..

Юлашкинчен пневмогидравлически домкрат, йывăр цехри рабочисен ĕçне тем териех çăмăллатакан ĕç хатĕрĕ пулса çитнĕ-çитнех. Çакăншăн рабочисем ăна тем териех тав тунă.

— Маттур пирĕн Никитин, питĕ лайăх пулăшрĕ пире!..

Заводри инженерсем каланă тăрăх, Семен Павлович Никитин тунă пневмо-

гидравлически домкратпа хальхи вăхăтра вагонсем юсакан ытти заводсенче те — Барнаултa, Дарницăра, Папасняра, Стрыйра тата ытти хăшпĕр хуласенче те ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Унăн авторне ку хыпар питĕ хĕпĕртеттерет...

...Завода пĕр харăсах пилĕк çĕнĕ станок-автомат илсе пынă, вĕсенчен пĕри гайкăсем туса кăлараканни пулнă. Анчах та, пуансон текен хатĕрсем çитменнипе, çав станок вăйĕпе çурри таран та усă курма май килмен. Инструментальщиксем çав пуансонсене станок валли кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе çитереймен. Завода çак «хурлăхран» та Семен Павлович хăтарнă. Вăл сĕннипе «цанговый патрон» тенине тунă, вара пуансонсене темиçе хут ытларах туса кăларма май килнĕ те — автомат пĕрре те ĕçлемесĕр тăман.

Çакăн пек тĕслĕхсем йĕркипех илсе кăтартма пулать.

Кунсăр пуçне, заводри инженерсем ăна хăй ĕçлекен станока универсальнăй — пур ĕçсене тума май паракан станок туса хунăшăн питĕ ырлаççĕ. Кун пирки заводра тухса тăракан «Вагонник» хаçатра та пĕрре кăна мар çырнă. Хăйĕн станокĕ валли вăл, хăй пуçĕпе шухăшла-

ға тупса, хӑй аллипе вуншар ҫӗнӗ пайсем туса тултарнӑ. Вӗсем унӑн инструментсем хумалли ещӗкӗнче шӑкӑриех тӑраҫҫӗ. Ҫирлӗ пулнӑ таран ҫав пайсемпе усӑ курса, вӑл хӑйӗн станокӗ тума пултарайман темӗн тӗрлӗ ӗҫ те тӑвать. Ӗҫӗсем вӗсем калама та ҫук кӑткӑс, чӑркӑш — ун пек ӗҫсене заводра урӑх никам та тума пултараймасть. Ҫавӑнпа та чи кӑткӑс, миллиметрсен пайӗсемпе кӑна виҫме май килекен «ҫӳхе» ӗҫсем тумалла пулсан, тӳрех Никитин патне пыраҫҫӗ.

— Семен Павлович, пӗтӗм шанчӑк сан ҫинче...

Семен Павлович нихҫан та турткаланса тӑмасть. Уншӑн пулсан — ӗҫӗ интереслӗрех пултӑр кӑна. Ҫӗнӗ япалана туса ҫитериччен хуть те вунӑ хут пӑсса юсамалла пултӑр, анчах ӑна тӑватех вӑл. Нимӗнле йывӑрлӑхсем те хӑратмаҫҫӗ ӑна. Ҫавӑнпах заводра пурте: «Пирӗн Никитинӑн аллисем — ылтӑн», теҫҫӗ...

* * *

Хӑйӗнпе калаҫса ларнӑ чух Семен Павлович пире пӗр кулӑшла истори каласа пачӗ.

— Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн заводра эвакуированнӑй рабочисем чылайччӗ.

Пирĕн цехра та пурччĕ вĕсем. Ун чухне эпĕ механически отделенинче мастер пулса ĕçлеттĕм. Пĕр ватăрах токарь питĕ ăста ĕçлетчĕ, тума хушнă детальсене ыттисенчен икĕ хут ытларах туса хатĕрлетчĕ. Мĕнле майпа? Ăна эпĕ хам та пĕлместĕмччĕ-ха ун чух. Пĕррехинче, юриех, çав старик патне хыçалтан пырса тăтăм та вăл мĕнлерех ĕçленине сăнама тытăнтăм. Пĕрре те ыттисем пек мар ĕçлет иккен, питĕ тухăçлă майпа ĕçлет. Çавăнпа ĕçĕ те ăнать имĕш унăн. Анчах тахăш самантра эпĕ сăнаса тăнине асăрхарĕ те çакă, йăпăр-япăр ĕç мелне улăштарчĕ, ыттисем майлă ĕçлеме тытăнчĕ. Кулăшла та пулчĕ ку, тепĕр енчен тарăхмалла та: старикĕн ĕçри «секрет» пур иккен, вăл ăна тухăçлă ĕçлеме май парать, анчах çав «секрета» никама та пĕлтересшĕн мар! Пулаççĕ вĕт çавăн пек этемсем — хăйсемшĕн çеç тăрăшаççĕ, производство, халăх, государство интересĕсем вĕсемшĕн — ниме те пĕлтермеççĕ. Анчах эпир хамăрăн заводра ĕçе лайăхлатма пулăшакан кашни çĕнĕ меслете, кашни паха опыта пурин хушшинче те хăвăртрах сарма васкатпăр...

Ку тĕлĕшрен Семен Павлович хăй те питĕ нумай усăллă ĕçсем тăвать. Хăйĕн

опытне, хăйĕн ăсталăхне никамран та пытарса усрамасть вăл. Хăйĕнпе пĕр станок çинче ылмашса ĕçлекен сменщика, Александр Сергеевич Дмитриева, вăл хăйĕн пĕтĕм опытне пани çинчен каламалли те çук ĕнтĕ. Дмитриев Семен Павлович хатĕрленĕ детальсемпе усă курма та вĕренсе çитнĕ, ун пекех кăткăс япаласем тума пĕлет. Кунсăр пуçне, Семен Павлович иртнĕ çулта тепĕр ăста рабочипе — Василий Андреевич Денисовпа пĕрле — хăйсен цехĕнче çамрăксене паха опыт памалли шкул организациленĕ, унта, ĕç хыççăн юлса, вунпилĕк çын таран вĕреннĕ. Çак шкулăн усси пысăк пулнă. Ытти чух та, ĕçленĕ вăхăтра хăй патне пырсан та, Семен Павлович хуть те кама та пулăшать, мĕн кирлине ăнлантарса ярать, мĕншĕн тесен унăн пĕтĕм ĕмĕчĕ — епле пулсан та производствăна çĕклеме ытларах пулăшасси, Тăван çĕршыва усă кӳресси...

* * *

Пирĕн халăх ĕçре малта пыракансене яланах хисеплет, вĕсене чыслать, шанать, вĕсен ятне пур чух та ырăпа асăнать. Хăйсен чунне парса, тӳрĕ

кăмăлпа ĕçлекенсем — пирĕн чи юратнă та хисеплĕ çынсем.

Çирĕм çул ытла заводра пултаруллă ĕçлекен Семен Павлович Никитин ячĕ те кунта пысăк хисепре. Рабочисем ăна умлăн-хыçлăн виçĕ хут Канаш хула Совечĕн депутатне суйланă,— унта вăл промышленноçпа транспорт тата строительство комиссинче ĕçлет. Ăна Хусан чугун çулĕн профсоюз комитетне суйланă, 1960 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа вăл — чугун çул çинче ĕçлекенсен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕн членĕ.

Малта пыракан рабочи, канăçа пĕлмен рационализатор заводри пур обществăлла ĕçсене те хастаррăн хутшăнать, вăл — «Вагонник» хаçатăн редколлеги членĕ, активлă рабкорĕ, час-часах цехсем тăрăх рейдлă бригадăсемпе çӳрет, тĕрлĕ суйлавсем вăхăтĕнче — агитатор. Паллах ĕнтĕ, кун пек ĕçсене чи шанчăклă та тӳрĕ кăмăллă çынсене çеç хушаççĕ.

...Вунă çул каяллах чугун çул çинче ĕçлекенсен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕпе Çул-йĕр министерстви Семен Павловича чи лайăх токарь ятне панă. Тепĕр çулталăкран вăл чи лайăх станочник ятне илнĕ — ку хисеплĕ ята каллех Мускав панă. Икĕ хутчен унăн ятне за-

водри Хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ. Çул-йĕр министерстви темиçе хутчен те хисеп паллисемпе наградăланă.

Хисеп хыççăн хисеп...

1959 çулхи августăн пĕрремĕшĕнче вара заводра ытла та савăнăçлă хыпар сарăлнă:

— Семен Павлович Никитина СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Социализмла Ĕç Геройĕн ятне памалла тунă!..

Қаçхи сменăра ĕçленипе, кун çинчен вăл ыттисенчен кая юлса, хăйне чун-чĕререн, чи ырă кăмăлпа саламлама чупса пынă юлташĕсенчен тин пĕлнĕ. Малтан ĕненес те килмен унăн: неушлĕ вара çав териех пысăк хисеп тунă пулать ăна Совет правительстви?..

— Çавăн пек пуласса эпĕ пуçа та илмен çав, ĕмĕтре те пулман ун пекки,— терĕ пире Семен Павлович.

Анчах ку тĕрĕсех пулнă-мĕн. Çав кунах ун патне СССР Çул-йĕр министрĕнчен, Бещев юлташран телеграмма çитнĕ:

— Сире хисеплĕ ят панăшăн чунтан савăнса саламлатăп, ырлăх-сывлăх, ĕçре тата пысăкрах çитĕнӳсем тума сунатăп...

Темиçе кунтан унăн кăкри çинче Ленин орденĕпе Ылтăн Çăлтăр çиçсе тăнă.

Чăваш çынни, ялти тимĕрçĕ ывăлĕ,

ахаль рабочи хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыври чи пысӑк хисепе тивӗҫлӗ пулнӑ.

Тивӗҫлех пулнӑ ҫав, мӗншӗн тесен Семен Никитин, хӗрӳллӗ патриот, коммунист, ырми-канми рационализатор, ӑста рабочи, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне, хастарлӑхне, ӑсне, опытне Тӑван ҫӗршыва, тӑван халӑха парать. Унӑн вӗри чӗрипе ылтӑн аллисем хамӑрӑн юратнӑ ҫӗршыври коммунизм строительствинче малашне тата нумай-нумай усӑ кӳрӗҫ-ха!

## ТЕЛЕЙ ТИМĔРҪИСЕМ

Мы — кузнецы, и дух наш молод.
Куем мы к счастию ключи..

*(Юрăран.)*

Марш пек хавaслă, кăмăла ҫĕклентерсе яракан ҫак юрра эпĕ хĕрĕх ҫула яхăн ĕлĕкрех юрланине астăватăп. Ун чухне эпир, пирвайхи пионерсем, тин ҫеҫ хĕрлĕ галстуксем ҫакнăччĕ те, Етĕрне урамĕсем тăрăх кашни кун тенĕ пекех хăмач ялавсем вĕлкĕштерсе, параппан ҫапса, мĕн вăй ҫитнĕ таран хытăрах кăшкăрса юрлама тăрăшса утаттăмăр:

Мы — кузнецы, и дух наш молод...

Пионертан «ўссе тухнă» хыҫҫăн эпĕ ку юрра урăх юрламан та пулмалла. Тен, унтанпа ăна илтмен те-и. Ҫавăнпа манса та кайнă. Анчах та Канашри вагонсем юсакан заводра ĕҫлекен пĕр тăван Дементьевсемпе паллашнă хыҫҫăн, уйрă-

мах вӗсен ашшӗн, тава тивӗҫлӗ ватӑ тимӗрҫӗ Сергей Семенович килӗнче пулнӑ хыҫҫӑн, ҫак тахҫан юрланӑ юрӑ темле хӑй тӗллӗнех аса килчӗ. Кӗвви те, сӑмахӗсем те. Мӗншӗн ун пек пулчӗ-ши вӑл? Кун пирки эпӗ каярахпа каласа пама тӑрӑшӑп...

Канашри вагонсем юсакан завода, ман шутпа, темӗн пысӑкӗш тимӗрҫӗ лаҫҫи теме пулать. Кунта эсӗ хуть те ӑҫта пырсан та, хуть те хӑш цеха кӗрсен те, ҫынсем тимӗрпе те хурҫӑпа ӗҫленине куратӑн. Хурҫӑ-тимӗре мӗнле кирлӗ ҫапла вартаҫҫӗ, чутлаҫҫӗ, саваласҫӗ, сыпаҫҫӗ, татаҫҫӗ, тӗрлӗ формӑсем ӑшне хурса лапчӑтаҫҫӗ — вагонсем валли нумай ҫулсем хушши тӳсмелли ҫӗнӗ пайсем, детальсем тӑваҫҫӗ. Пӗр цехра кӑна ҫынсем йывӑҫпа ӗҫленине тӗл пулатӑн — унта вагон урайӗсене сараҫҫӗ, стенисемпе маччисене тӑваҫҫӗ. Анчах та ку ӗҫ чӑн юлашкинчен пулса иртет.

Пурте пӗлеҫҫӗ: Канашри ҫак завод — пирӗн республикӑри чи малта пыракан промышленность предприятийӗсенчен пӗри. Ку ҫеҫ те мар: вӑл пӗтӗм Совет Союзӗнчи вагонсем юсакан заводсем

хушшинче те малти ретре тăрать. Кунта продукци туса кăлармалли плана çултан çул срокчен тултарса пыраççĕ, планран иртттерсе, çĕршыври чугун çулсем валли темиçешер çĕр вагон юсаса кăлараççĕ.

Питĕ ĕçчен те хастарлă коллектив ку заводра, лайăх çынсем питĕ нумай унта,— çавăнтан килет те ĕнтĕ завод ялан малти ретре пыни. Халĕ вĕсенчен нумайăшĕ коммунизмла ĕçлекен бригадăсене пĕрлешнĕ те ĕçре çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ, тата нумайăшĕ çав хисеплĕ те ответлă ята илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешеççĕ. Кунтан-кун сарăлса пырать çав пархатарлă, мухтава тивĕçлĕ кĕрешӳ.

Çынсем çинчен каланă май, манăн уйрăмах акă мĕне палăртса хăварас килет. Кашни цехрах тĕл пулатăн вĕсене. Кунта вĕсем тахçанах, завода тин çеç купалама тытăннă чухнех килнĕ те ăна хăйсен аллисемпе тунă, хăшĕсем вуншар тĕслĕ ĕçре пулса курнă, нихăшне те тиркемен, заводчĕ хăвăртрах пулса çиттĕрччĕ кăна! Унтан вара ĕмĕрлĕхех кунта юлса тымар янă. Заводра 20—25 çул таттисĕр ĕçленĕ хыççăн, çав çынсенчен чылайăшĕ ватăлнă та ĕнтĕ, пенсие куçнă, совет законĕсен пархатарĕпе усă курса — ватлăхра ка-

наççĕ, анчах вĕсен хушамачĕсем заводра тăрăшса ĕçлекенсен спискисенче хуралман,— ашшĕ-амăшĕсем вырăнне вĕсен ывăлĕсемпе хĕрĕсем тăнă, вĕсем ашшĕсем пуçланă ĕçе малалла туса пыраççĕ.

Кун пек тĕслĕхсем заводра сахал мар.

Пĕррехинче эпир заводра тухса тăракан «Вагонник» хаçатăн секретарĕ Иван Яковлевич Марковпа кунти ветерансем çинчен, пĕтĕм килйышĕпех заводра ĕçлекенсем çинчен сăмах хускатрăмăр. Вăл тӳрех эпĕ пĕлмен темле Дементьевсене асăнчĕ.

— Тĕлĕнмелле килйыш!— терĕ вăл.— Дементьевсем çинчен Кочетовăн «Журбины» е «Братья Ершовы» романĕсем евĕрлĕ кĕнеке çырма та пулать, ним ӳстермесĕр калатăп! «Дементьевсĕн династийĕ», теççĕ вĕсене хăшпĕрисем. Тимĕрçĕсен династийĕ. Аслашшĕ те тимĕрç пулнă, ашшĕ те,— вăл пирĕн заводра çирĕм икĕ çул ĕçленĕ,— халĕ унăн виçĕ ывăлĕ — гладиатор пек паттăрскерсем!— пĕр цехра ĕçлеççĕ. Хĕрĕ те заводрах — рабочисен столовăйĕнче, повар. Чăн та чăн ĕç çемйи ĕнтĕ, совет çемйи!

Çак калаçу хыççăнах эпĕ РКЦ-на (ремонтно-комплектовочнăй цеха) кайса çав пĕр тăван Дементьевсене шыраса

тупрăм та, вĕсем мана ыран, вырсарникун, хăйсен ашшĕ килне пыма хушрĕç.

— Çанмалли кунсенче эпир яланах пĕр-ик сехетлĕх те пулин аттепе анне патне пухăнатпăр, пымасан çиленеççĕ старике сем, кичем пире сирĕнсĕр, ахаль те эрнипех курмастпăр, теççĕ...— кăмăллăн кулса илчĕ Дементьев пĕр тăвансенчен асли, Виктор.— Кӳрентерес килмест ват çынсене!

— Пит аван йăла ку, — терĕм эпĕ.— Ваттисене яланах хисеплес пулать...

Чăнах та çавăн пекех иккен — халь заводра ĕçлекен ыр ятлă Дементьевсен аслашшĕ те тимĕрç пулнă, анчах çемйине епле те пулсан выçă лартас мар тесе, пăчă лаçран иртен пуçласа каçчен тухмасăр, лăш курмасăр ĕçленипе чахоткăпа чирлесе кайнă та хĕрĕх çула çитичченех вилнĕ. Унăн аслă ывăлĕ Сергей ун чухне вунтăваттăра, кĕçĕнни, Федор, çиччĕре пулнă. Çимелĕх çăкăр тупас тесе, Сергей урăх тимĕрç патне кайса кĕрĕшнĕ (сунтал таврашĕнче ĕçлеме ашшĕнчен кăшт вĕренкелесе юлнă вăл). Кунĕпех вара йывăр мăлатук-кувалда çаврăннă унăн аллисенче.

— Қаҫчен ура ҫинче тăраймиех пулаттăм, киле ӳсĕр сын пек сулкаланса ҫитеттĕм...— аса илет ватă Дементьев.

Ӳссе ҫитсен Сергей Семенович пĕр хушă Донбасса кайса ĕҫлесе пурăннă, унтан, тăван ялне таврăнса, тăватă ҫул хушши колхоз тимĕрҫи пулнă, 1937 ҫулта вара Қанашри ҫак завода килнĕ те — урăх ниҫта та хускалман. Заводра таттисĕр 22 ҫул хушши ĕҫленĕ хыҫҫăн пенсие тухнă. Пурĕ хĕрĕх ҫул ĕҫленĕ вăл, ҫитменнине тата ялан йывăр ĕҫре, вут умĕнче, хĕртнĕ тимĕрпе хурҫă ҫумĕнче пулнă. Ҫав хушăра пĕрре те сăлтавсăр ĕҫе тухманни пулман унăн, никам та япăх ĕҫлетĕн тесе каламан ăна. Ăҫтан сив сăмах калатăн-ха ҫулталăк хушшинче икĕ ҫул нормине тултаракан ҫынна?! Ана яланах тав тунă та тĕрлĕрен премисем, наградăсем панă, ватăлнипе канма каймалли вăхăт ҫитсен те завод управленийĕ хисеп грамоти парса, укҫапа премилесе ăсатнă...

Ĕҫе юратакан, пĕрмай ĕҫпе пурăнакан ҫемьере наянсемпе харампырсем ӳсмеҫҫĕ. Сергей Семенович килĕнче те ҫавăн пекех пулнă. 1929 ҫултан пуҫласа, унăн кашни виҫĕ ҫултах ачасем ҫуралса пынă — малтан виҫĕ ывăл, унтан икĕ хĕр.

Сергей Семеновичпа унăн мăшăрĕ Елена Алексеевна, упăшки пекех вашават, ĕççен хĕрарăм, хăйсен ачисене нихçан та ашкăнса-иртĕнсе, «йытă хăваласа» çÿреме паман, пурне те çамрăклах ĕçе хăнăхтарнă. Çавăнпа лайăх çынсем пулса ÿснĕ те вĕсем, çавăнпа пурте пысăк квалификациллĕ ăста рабочисем пулса тăнă.

...Кăнтăрла çитеспе Сергей Семеновичăн пĕтĕм килйышĕ пухăнса çитрĕ. Малтан асли, Виктор, хăйĕн пĕтĕм çемйипе — арăмĕпе, икĕ ачипе пырса кĕчĕ, унтан вăталăхĕ — Василий, вăл та арăмĕпе, ачипе. Часах кĕçĕн ывăлĕ Николай та хулхушшине кĕнекесем хĕстерсе таврăнчĕ. Вăл, ĕçленĕ вăхăтрах каçхи вăтам шкулта вĕренекенскер, илемлĕ литература вулама питĕ юрататъ иккен. Хĕрачисем, Валяпа Галя, унчченех килтеччĕ, радиоприемнике пăркаласа хавасларах музыка шыратчĕç.

Сергей Семеновичăн хăй аллипе тунă пысăках мар пÿрчĕ тулсах ларчĕ — вунăкĕ çын вĕт-ха, кашнинех вырăн кирлĕ.

— Çаксем пурте Дементьевсем-и ĕнтĕ?— пĕлнĕ çĕртех ыйтнă пек турăм эпĕ.

— Пурте, пурте хамăрăн,— йăл кулса илчĕ Сергей Семенович.— Анчах та ку

пётёмпех мар-ха, Дементьевсем татах пур... Хунавлă пирĕн йăх!

Çав вăхăтра алăкран лайăх кăна пальто тăхăннă, хура уссиллĕ, лутрарах та патвар кĕлеткеллĕ, пĕр аллă çулсене çитнĕ çын кĕрсе тăчĕ.

— Ак тата тепĕр Дементьев, тепĕр тимĕрçĕ çитрĕ!— терĕ Сергей Семенович. — Хывăн, Федя, ирт малалла. Шăпах апат тĕлне çитрĕн...

Ку — кил хуçин тăван шăлнĕ Федор Семенович Дементьев иккен. Ашшĕ вилнĕ чух çиччĕре кăна пулнăскер, вăл та ура çине тăрса «çын пуличчен» нумай терт курнă, таçта та çитнĕ, анчах яланах пĕртен-пĕр тĕрĕс çулпа — ĕç çулĕпе пынă. Вăл та, пиччĕшĕ пекех, çамрăклах тимĕрçе вĕренсе, ĕмĕр тăршшипех çав ĕçпе пурăннă, пиччĕшĕ Канашри завода вырнаçсан ун хыççăн килсе тӳрех кузнечнăй цеха кĕнĕ те, паян кун та çавăнтах прессовщикра ĕçлет. Ытти пур Дементьевсем пекех, Федор Семенович та ырă ятлă, заводăн чи шанчăклă та пултаруллă, заводăн тĕп никĕсĕ, тĕрекĕ пулса тăракан рабочисен малти ретĕнче.

Дементьевсемпе тĕплĕнрех паллашсан, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ыйтса пĕлсен, çамрăк Дементьевсем — виçĕ тăван — мĕнлерех ĕçленине кайса курсан, Максим Горький «Амăшĕ» романăн пуçламăшĕнче ылханлă патша Российинчи рабочисем мĕн тери асаплă та хăрушла пурнăçпа пурăнни çинчен каланисем пуçа пырса кĕчĕç. Вулакансене те аса илтерес килет манăн çав ырăнсене.

«...Нумай çулсем хушши ĕçлесе ывăннипе çынсен апат та анми пулнă, çавăнпа та, çиес тесе, вĕсем нумай ĕçнĕ, вар-хырăма эрехпе çунтарнă... Ĕçпе ĕшенсе çитнĕ çынсем хăвăрт ӳсĕрĕлнĕ, вара пурин кăкрисенче те ăнланмалла мар йывăр тарăху çĕкленсе хăпарнă. Вăл ирĕке тухмалли çул шыранă. Вара, çав пăлхавлă туйăма ирĕк пама пултармалли кашни сăлтав çумнех çулăхса, çынсем пĕр-пĕрин çине тискер кайăксен çиллипе сиксе ӳкнĕ. Юнлă çапăçусем пуçланса кайнă. Хăш чух çав çапăçусенче пĕр-пĕрне йывăр амантни те, вĕлерни те пулкаланă».

«...Праçниксенче çамрăксем киле çĕрле, питĕ кая юлса, çурăлса пĕтнĕ тумпа, пылчăкланса, тусанланса, суранланса пĕтнĕ

пит-куçсемпе, хăшĕсем хăйсен юлташĕсене епле хĕненипе усаллăн мухтанса, хăшĕсем кӳренсе, тарăхса, кӳреннипе макăрса, ӳсĕр те мĕскĕннĕн, телейсĕр те йĕрĕнмелле пулса пырса кĕнĕ. Хăш чухне йĕкĕтсене киле амăшĕсем, ашшĕсем çавăтса таврăннă. Ачисене вĕсем ăçта та пулин урамра, хӳмесем çумĕнче е хупахсенче, ним пĕлми ӳсĕрскерсене, шыраса тупнă, усал сăмахсемпе вăрçнă... хĕнессе те хытă хĕненĕ, анчах çамрăксем ĕçсе супни тата пĕр-пĕринпе çапăçни стариксене тĕлĕнтермен, ăна вĕсем йĕркипе пулса пыракан ĕç вырăнне хунă, мĕншĕн тесен ашшĕсем хăйсем те çамрăк чух вĕсем пекех ĕçнĕ, çавăн пекех çапăçнă, вĕсене те ашшĕ-амăшĕсем хĕненĕ. Пурнăç яланах çавăн пек пулнă,— вăл çултан çул пăтранчăк шыв юххи пек пĕр евĕрлĕн те вăраххăн таçталла юхса пынă...»

«...Çынсем пурнăç хăйсене яланах пĕр пек йывăрлăхпа пусса тăнине хăнăхса çитнĕ, çавăнпа вĕсем лайăххи еннелле нимĕнле улшăну пуласса та кĕтмен, пур улшăну та пусмăра пысăклатма пултарать çеç тесе шутланă».

«...Çавнашкал пурнăçпа пĕр аллă çул пурăнсан — çын вилнĕ».

Чăн пурнăçра пулма та пултарайман,

темле хăрушла тĕлĕк пек туйăнаççĕ пире халь аслă писатель çырса кăтартнисем. Анчах та çавăн пек пурнăç пулнă-çке вăл, чăн-чăнах пулнă! Хăрушă, тискер, ĕç çыннине аллă çула çитнĕ-çитменех тупăка хунă çав пурнăç йĕркисене рабочи класс вунçиччĕмĕш çулта яланлăхах аркатса, тĕп туса хунă та аслă телей çулĕ çине тухнă. Рабочи класс ун чухне пурнăç тилхепине хăй аллине илсе, хăй валли чăн-чăн телейлĕ те çутă пурнăç тума тытăннă. Унтанпа ĕнтĕ хĕрĕх çул ытла иртрĕ, рабочи класăн çав хушăра нумай кĕрешмелле, тăшмансене, нушана, выçлăха, пурнăçри пур çитменлĕхсене çине тăрса, шăл çыртса пĕтерсе пымалла пулчĕ, анчах пĕрре алла илнĕ телее вăл алăран вĕçертмерĕ.

Пурнăç тĕпренех улшăнса, юсанса, лайăхланса пынă май рабочи класс хăй те улшăнчĕ. Паянхи рабочие патша вăхăтĕнчи рабочипе нихăш енчен те танлаштарма çук çав. Паянхи рабочи — çунатлă, çутă ĕмĕтлĕ, ырă кăмăллă, телейлĕ. Ӳн умĕнче — пур çулсем те уçă...

Çакна эпир Дементьевсен «династийĕ» çине, пуринчен ытла вĕсен ывăлĕсем çине пăхсанах питĕ лайăх куратпăр. Çывăхарах паллашар-ха акă вĕсемпе.

Сергей Семенович Дементьеван аслă ывăлĕ Виктор, ун чухне пурнăç йывăртарах пулнипе, шкулта ултă класс пĕтерсенех заводра ĕçлеме тытăннă. Анчах вĕренме пăрахман — çиччĕмĕш класа каçхи шкула çӳресе пĕтернĕ. Ашшĕ çулĕпе пырса, вăл кузнечнăй цеха кĕнĕ те газорезчик ĕçне хăнăхма тытăннă. Çак ĕçе вĕренсе çитсен, ăна РКЦ-на, хăй халь ĕçлекен цеха куçарнă. Унтан Виктора Совет Çарне илнĕ. Виçĕ çултан киле таврăнсан, вăл каллех РКЦ-на вырнаçнă, ĕçленĕ хушăрах, хăй тĕллĕнех газосваркăна вĕреннĕ. Сăпайлă, хăшпĕрисем пек мар тăрăшса ĕçлекен йĕкĕте часах цехри комсомол организацин секретарĕ пулма суйланă.

Пĕррехинче ăна цех начальникĕ хăйĕн пӳлĕмне чĕнсе илнĕ те çакăн пек калаçу пуçласа янă:

— Виктор, пирĕн автосцепкăсем тăвакан участокра ĕçсем начар вĕт, пĕлетĕн-и эс çавна?

— Пĕлетĕп,— тенĕ Виктор,— плана та тултараймаççĕ, брак та нумай пулать вĕсен...

— Мĕн шутлатăн? Кун пек хăварма юрамасть вĕт!

— Çитес пухура сӳтсе явăпăр.

— Пухăва кĕтсе тăрас мар, шăллăм. Эсĕ ху куç-ха унта, кăтартса пар çынсене мĕнлерех ĕçлемеллине!

— Эпĕ вĕсен технологине пĕлсех çитейместĕп-çке...

— Вĕренетĕн! Санăн пуçу лайăх ĕçлет. Иккĕленерех пулин те, Виктор цех начальникĕ сĕннипе килĕшнĕ. Комсорг пырсан вара цехри кая юлса пыракан участокри ĕçсем часах лайăхланма пуçланă. Çапах та Виктор хăйĕн пĕлĕвĕ сахалтараххине кулленех туйнă. Вĕренес пулать! Нумай шухăшласа тăмасăрах вăл каçсерен чугун çул транспорчĕн техникумне çӳреме пуçланă. Пилĕк çул хушши çине тăрсах вĕреннĕ те, 1959 çулхи çуркунне диплом илнĕ — ăна вагон хуçалăхĕн техник-механикĕ ятне панă.

Техникумăн иккĕмĕш курсĕнче вĕреннĕ чухнех Виктора автосцепкăсем туса кăларакан участока пĕтĕмĕшпех шанса панă — мастер вырăнне лартнă. Паян кун та вăл çавăнтах ĕçлет. Унăн участокĕ кашни уйăхрах производство планне ирттерсе тултарать, вăл ертсе пыракан икĕ бригада, пĕр-пĕринпе ăмăртса, питĕ лайăх çитĕнӳсем туса пыраççĕ, нихçан та заводри Хисеп хăми çинчен «анмаççĕ». Çак икĕ бригадăри вăтăр сакăр рабочи-

рен хашĕ те пулин ĕç нормине тултарманни пĕрре те пулман.

— Пирĕн пĕтĕм участок халĕ коммунизмла ĕçлекенсен ятне илесшĕн кĕрешет,— терĕ Виктор Сергеевич.

— Ку хисеплĕ ята илесси час пулас пек-и?— ыйтрăмăр эпир.

— Срокне тĕп-тĕрĕс кăтартса пама çук, анчах та кĕрешӳ ăнăçлах пырать-ха,— ответлерĕ Дементьев.— Коммунизмла ĕç паллисем уççăнах курăнса тăраççĕ ĕнтĕ. Мĕнрен, тетĕр-и? Чăн малтан, участокра ĕçлекенсем пурте ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыраççĕ. Темрен хăраса, хăйсене ятласран, айăпласран шикленсе мар, кун пек тавраш çук пирĕн, çынсен хăйсен кăмăлĕ çавăн пек пулнипе, коллективра пурин те пĕр пек ответлă пулмаллине ăнланнипе... Никам та, никама та улталама шутламасть. Сăмахран, кун каçа мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан карточкăсене рабочисем хăйсемех çырса параççĕ — эпĕ тĕрĕслеместĕп те вĕсене, алă пусса çеç паратăп, мĕншĕн тесен çынсене шанатăп, ĕненетĕп. Ку пĕрре. Унтан: пирĕн рабочисем çине тăрсах, пĕрмаях хăйсен ăсталăхне, квалификацине ӳстерсе пыраççĕ. Кашниннех халĕ 2—3-шер специальность пур. Произ-

водствӑшӑн ку ҫав тери аван! Хӑшӗ те пулин чирлес пулсан е отпуска-мӗне кайсан, ун вырӑнне ҫав кунах урӑххи тӑма пултарать, вара ӗҫре нимӗнле чӑрмав та пулмасть. Ку ҫеҫ те мар, пирӗн ҫынсенчен нумайӑшӗ вӗренеҫҫӗ. Пӗрисем чугун ҫул техникумӗнче, теприсем каҫхи вӑтам шкулта. Начар-им ку? Ҫынсем паянхипе ҫеҫ пурӑнмаҫҫӗ, ыраналла пӑхаҫҫӗ, ҫавӑнпа хӑйсен пӗлӗвне, культурине ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ.

— Питӗ лайӑх, Виктор Сергеевич...

— Рабочисем хушшинче рационализаторсем йышлансах пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта тӑхӑр ҫын производствӑна лайӑхлатма пулӑшакан сӗнӳсем пачӗҫ, пурте вырӑнлӑ пулчӗҫ.

Ӗҫри юлташӗсем ҫинчен Виктор Сергеевич ҫав тери ӑшӑ кӑмӑлпа каласа парать, анчах хӑй ҫинчен нимех те каласшӑн мар. Ҫынни ахаль те хӗр пекех именекенскер вӑл, пулчӗ-пулмарӗ хӗрелсе илет. Таса та тӳрӗ чунлӑ ҫыннӑн ҫеҫ пулать ун пекки.

Виктор Дементьевич ҫинчен эпӗ кайран заводри аслӑрах пуҫлӑхсенчен тӗплӗрех ыйтса пӗлтӗм.

— Канӑҫсӑр этем,— терӗҫ вӗсем.— Пӗрмай шырать: производствӑна епле

майпа тата ытларах лайăхлатмалла, çынсен ĕçне мĕнле çăмăллатмалла? Вăл хăйне именчĕклĕрех тытни çине ан пăхăр эсир, унăн характерĕ — тутăхман хурçă пек! Хăйĕн участокĕнче мĕнле те пулин çĕнĕ япала тума шут тытрĕ пулсан — çавна тăвать-тăватех, хуть те çĕр тĕслĕ чăрмав пултăр ун умĕнче. Пурпĕр çĕнтерет! Тата акă мĕн паха: Дементьев хăйĕн участокĕнчи çитменлĕхсене кăна мар, пĕтĕм заводри чăрмавсене пĕтерсе пырасшăн тăрăшать. Уншăн пĕтĕм завод хаклă...

Виктор — заводри чи хĕрӳллĕ активистсенчен пĕри. Цехра вăл парти контроль комиссин председателĕ, парторг заместителĕ, заводри юлташла суд членĕ. Пур чухне те агитатор. Тата — активлă рабкор. Хăшпĕр çитменлĕхсемпе кĕрешес ĕç ахаль ăнмасан, вăл пирĕн пичетĕн иксĕлми вăйĕпе усă курать. Кун пирки нумаях пулмасть «Советская Чувашия» хаçатра та çырнăччĕ-ха. Пĕррехинче Дементьевăн рационализаторла паха сĕнĕвне чылайччен йышăнмасăр тăнă (бюрократизм чирĕ пур-ха вĕт пирĕн, пĕтмен), таçта та çитнĕ вăл, анчах усси пулман. Вара вăл, çакăн çинчен виçĕ хутчен хаçатра çырса, хăйĕн шухăшĕсем

тӗрӗс пулнине пурпӗрех кӑтартса пана. Юлашкинчен унӑн сӗнӗвне йышӑннӑ та, завод халӗ ҫавна пула ҫулталӑкра вуншар пин тенкӗ перекетлет. Кун пеккисем пӗрре кӑна та мар пулнӑ!

Рабочисене те хӑй пекех ҫирӗп принциплӑ пулма, пӗтӗм вӑя, ӑс-тӑна, пултарулӑха производствӑна пама, таса та тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлеме вӗрентет вӑл. Ҫавӑнпа унӑн участокӗнчи ӗҫсем те ӑнса пыраҫҫӗ...

Виктор шӑлнӗ Василий те унӑн ҫулӗпех пырать. Вӗсен биографийӗсем икӗ шыв тумламӗ пекех пӗр евӗрлӗ. Вӑл та, пиччӗшӗ пекех, улттӑмӗш класс хыҫҫӑн заводри кузнечнӑй цеха пырса кӗнӗ те газосварщике вӗреннӗ. Ҫиччӗмӗш класа каҫ-каҫ вӗренсе пӗтернӗ. Икӗ ҫул ӗҫленӗ хыҫҫӑн, Совет Ҫарне кайса килсен, каллех малтанхи вырӑнта ӗҫлеме тытӑннӑ. Тӑрӑшса ӗҫленине пула унӑн ӑсталӑхӗ ӳссех пынӑ, разрядсем те хӑпарнӑ. Ҫавна кура, ӑна РКЦ-ри вагон тормозӗсен «башмакӗсене» тӑвакансен бригадирӗ пулма хушнӑ. Ик-виҫӗ ҫул каялла ӗҫсем ытлашшиех ӑнса пыман, бригада —ултӑ ҫын — сменӑра пӗтӗмпе

те 90 «башмак» çеç туса кăларнă. Пуринчен ытла, хăйсем тăвакан япалана пĕтĕмпе туса çитерме ытти специалистсем (тимĕрçĕсем, электросварщиксем) патне илсе каймалла пулни хытă чăрмантарнă.

— Кун пек май килмест,— шут тунă вара çамрăк бригадир,— капла çын кусĕнчен пăхса пурăнсан эпир нумаях малалла каяймăпăр...

Вăл çине тăрсах хăйне комплекслă бригада туса пама ыйтнă,— «башмаксене» пĕтĕмпе туса çитерме мĕнле ăстаçăсем кирлĕ, бригадăра çавсем пурте пулччăр! Пуçлăхсем патне чылай хушă çӳренĕ хыççăн, унпа килĕшнĕ. Вара бригада тепĕр уйăхĕнчех 90 «башмак» вырăнне 160 юсаса кăларнă. Анчах та ку пуçламăшĕ çеç пулнă-ха.

1958 çулхи кĕркунне, çĕршыври малта пыракан предприятисенче коммунизмла ĕçлекен бригадăсем тăвассишĕн хăватлă юхăм пуçланса кайсанах, çамрăк та хастарлă бригадир юлташĕсене пухнă та кăмăллă калаçу пуçласа янă.

— Пирĕн бригада начарах ĕçлемест ĕнтĕ, анчах, ман шутпа, эпир тата лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, коммунизмла ĕçлекен бригада ятне илессишĕн кĕрешме те май пур пирĕн...

Юлташёсем унпа килёшнё. Малтанлăха вёсем сменăра 180 «башмак» юсаса кăларма йышăннă, анчах кашни кунах унтан чылай ытларах кăларнă. Шăп çулталăк иртсен вара вёсен калама та çук пысăк савăнăç пулнă — цехри рабочисен пухăвё вёсен бригадине коммунизмла ёçлекен бригада ятне пама йышăннă.

— Туслă пурăнатпăр, ёçсем те ăнса пыраççё,— тет Василий Сергеевич.— Халь ёнтё сменăра вăтамран шутласан 230 «башмак» юсаса кăларатпăр. Пёр брак та пулмасть. Пирён продукцине ОТК-ра (отдел технического контроля) тёрёслемесёрех йышăнаççё...

— Бригадăри çынсем улшăнмаççё-и?

— Улшăннисем пулкаланă, хăшёсене урăх участоксене куçарчёç, анчах çёнёрен пыракансем те лайăх ёçлеççё. Хамăр вёрентетпёр. Акă, пёлтёр хамăн шăллăма, çак Николая илтёмёр. Газосварщик вăл. Аптрамасть ачи... ăсё-пуçё те пур, кахал та мар,— кулса илет Василий Сергеевич, шăлнё çине кăтартса.

— Пирён çемьере кахалсем пулма пултараймаççё,— калаçăва хутшăнчё вată Дементьев.— Ун пек вёрентмен эпир хамăрăн ачасене...

— Лайăх вёрентнё эсир вёсене, Сер-

гей Семенович, чăн-чăн ĕç çыннисем туса ӳстернĕ, чыс та мухтав сире уншăн!— тесе калас килчĕ ман ăна.

Пиччĕшĕсем хыççăн аслă хĕрĕ Валя та, вунă класс пĕтернĕ комсомолка, заводах пынă вĕт-ха. Ан тив, вăл цехра, станок умĕнче тăмасть пултăр, анчах темиçе пин çынлă завод коллективне çитерсе-ĕçтерсе тăрантарасси — пĕчĕк ĕç-им вăл?

Дементьевсен чи кĕçĕн ачи, Галя, халь çиччĕмĕш класра вĕренет. Эпир унпа та сăмах хушса илтĕмĕр:

— Шкултан вĕренсе тухсан ăçта каяс тетĕн?

— Завода,— терĕ вăл ним тытăнса тăмасăр.

— Ачисем савăнтараççĕ-ха, ӳпкелешмелли çук,— тулли кăмăлпа каларĕ вĕсен амăшĕ эпир тухса каяс умĕн.— Ку тарана çитсе вĕсем пирки никамран та усал сăмах илтмен...

— Халь тин илтместĕр те пулĕ,— терĕмĕр эпир.— Сирĕн ачăрсем пуриншĕн те пример пулса тăраççĕ. Кашни çемьерех ӳсчĕрччĕ вĕсем пек хастар ĕçченсем! Вара коммунизма та хăвăртрах çитнĕ пулăттăмăр эпир...

...Çак Дементьевсемпе, ырă та кăмăллă совет çыннисемпе, «потомственнăй»

тимӗрҫӗсемпе сывпуллашса урама тухсан аса килчӗ те ӗнтӗ мана ача чухнех юрланӑ юрӑ.

Мы — кузнецы, и дух наш молод,
Куем мы к счастию ключи...

Ку юрӑри сӑмахсене ятарласа Дементьевсем пирки каланӑ пекех туйӑнчӗ. Чӑнах та, вӗсем хамӑр ҫӗршывӑн, халӑхӑн телейне туптакан тимӗрҫӗсем мар-им?

---

## ВАГОНСЕМ ИЛЕМЛЕНСЕ ТУХАҪҪӖ...

Канашран Вăрмаралла кайнă чухне те, Тĕрлемесрен Канашалла таврăннă чух та «вырăнти поезд» «Иккĕмĕш Канаш» станцийĕнче темиҫе минутлăха чарăнса тăрать. Ҫавăн чух эсир чӳрече витĕр пăхатăр та, кунти запаслă ҫулсем ҫинче тавар турттармалли вĕр-ҫĕнĕ вагонсем, ҫурма-вагонсемпе платформăсем питĕ нумай тăнине куратăр. Вĕсем пурте тин ҫеҫ Канашри вагонсем юсакан заводран тухнăскерсем.

Темиҫе кун каялла ҫав вагонсем «чирлĕ» пулнă — вĕсен аманса, хăйпăнса, тĕссĕрленсе, сăрĕсем кайса пĕтнĕ стенисем ҫинче шурă пурăпа «больной» тесе ҫырни палăрнă. Халĕ акă, завод цехĕсем витĕр тухнă хыҫҫăн, вĕсем йăлт ҫĕнĕрен тунă пекех курăнаҫҫĕ. Заводра вагонсен пур пайĕсене те — тĕнĕлĕсемпе кустăрмисенчен пуҫласа урайĕ-стени та-

ранах, алӑк хӑлӑпӗсемпе пусса хӑпармалли картлашка хӑмисем таранах тӗрӗсленӗ, тӳрлетнӗ, ҫӗнетнӗ. Пӑхма та кӑмӑллӑ вӗсем ҫине: ҫиелтен кӑшт тӗксӗмрех ҫӑра хӗрлӗ сӑрпа сӑрланӑ та, хӗвел ҫутинче йӑлтӑртатса кӑна тӑраҫҫӗ, стенисем ҫинче — тӗрлӗ ҫӗрте — шап-шурӑ пысӑк саспаллисемпе ҫырнисем палӑраҫҫӗ.

Ҫакнашкал «иккӗмӗш хут ҫуралнӑ» вагонсем заводран вӗҫӗмсӗр тухаҫҫӗ — пӗр чарӑнмасӑр, куллен-кун. Иртнӗ ҫулта Канашри завод ҫӗршыври чугун ҫулсем валли тӑхӑр пин вагон ытла юсаса панӑ.

Заводӑн темиҫе пин ҫынлӑ хастар коллективӗнче хӗрарӑмсем те сахал мар. Вӗсем те кунта питӗ пултаруллӑ, чунчӗререн тӑрӑшса, тӳрӗ кӑмӑлпа, пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ. Нумайӑшӗсен сӑнӗсем Культура дворецӗнче, заводри чи паллӑ та хисеплӗ ҫынсен сӑнӗсемпе пӗр ретре ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсен ячӗсене заводри Хисеп кӗнеки ҫине те ҫырса хунӑ. Вӗсем ҫинчен заводра тухса тӑракан «Вагонник» хаҫатра та ҫыраҫҫӗ, вӗсене пысӑк наградӑсем, премисем параҫҫӗ.

Ҫавӑн пек чун-чӗререн тӑрӑшса ӗҫленипе ырӑ ятлӑ пулакан хӗрарӑмсен шучӗ куллен-кун ӳссе пырать. Пӗрисем

халĕ коммунизмла ĕç бригадисене пĕрлешсе ĕçлеççĕ, теприсем çав чыслă ята тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешеççĕ...

Çак пĕчĕк очеркра манăн шăпах вĕсенчен хăшпĕрисем çинчен каласа кăтартас килет те ĕнтĕ.

Çĕршыври чугун çулĕсем тăрăх пин-пин километр чупнă, пин-пин тонна груз çĕклесе çӳренĕ хыççăн кивелсе, шултăркаса çитнĕ вагонран каллех ĕçе юрăхлă вагон тума заводра ăна темиçе цех витĕр кăлараççĕ, ӳппĕн те питтĕн çавăркаласа тӳрлетеççĕ. Мĕн кăна тумаççĕ пуль унпа! Юлашкинчен çапах та вагон пулса çитет-çитетех. Пурте хатĕр ĕнтĕ — кустăрми-тĕнĕлĕсене те улăштарнă, кузовне те — урайĕ-стенисене, маччисене — йăлтах çĕнетнĕ. Вагон халь тесен халь ĕçе кайма пултарать, анчах та çук-ха, ăна заводран ниепле те кăларса яма юрамасть. Ăна тата лайăх кăна сăрлас пулать. Тимĕр пайĕсене те, йывăçран тунисене те. Сăрламасан, тимĕр пайĕсем час тутăхаççĕ, йывăçран тунисем — çĕреççĕ, çитменнине тата вагонсен тĕсĕ те илемлĕ пулмасть.

Цехран цеха куçса пырса, эпир шăпах

çав вагонсене сăрланă çĕре çитсе тăтă-мăр. Кунта пĕтĕмпех хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Пĕрисем вагонăн тимĕр пайĕсене сăрлаççĕ, теприсем — стенисене. Кусем çăмăл кăна пусмасем çине хăпарса тăнă та, баллонри краскăна пульверизаторсемпе сирпĕтеççĕ.

— Парикмахерскинче одеколонпа сапнă пекех-иç ку?— кулса илчĕ пирĕнпе çӳренĕ пĕр юлташ.— Шăрши те пур...

— Анчах кунта пĕрре сапса яни вунă çула пырать çав,— терĕ заводри инженер.— Саваламасăр та тасалмасть!— Çавăнтах вăл пусма çинче ĕçлесе тăракан хĕрарăм патнерех пырса хыттăн ыйтрĕ:— Фекла Ивановна! Думкина! Миçемĕш вагон сăрлатăн паян?

— Вунçиччĕмĕш пулмалла!— илтĕнчĕ ăна хирĕç çӳлтен.

Эпир малалла, цех вĕçнелле, урамалла тухмалли алăк патнерех кайрăмăр. Кунта ĕнтĕ пĕтĕмпех сăрласа çитернĕ хура кустăрмаллă хĕп-хĕрлĕ вагонсем тăраççĕ. Вĕсем патĕнче те хĕрарăмсем ĕçлеççĕ, çавăн пекех çӳлĕ тимĕр пусма çине хăпарса тăрса, пульверизатор витĕр шурă сăр — белила сирпĕтсе, трафаретсем лартаççĕ. Пĕр тĕле пĕрĕхтереççĕ те — вагонăн çӳлти кĕтесси çине «СССР» тени

çырӑнать, унтан аяларах анса сирпĕтесçĕ те — «Қап. рем. Қанаш. з-д» тени курӑнакан пулать, çавӑнтах вагона ремонтран хӑçан кӑларнине те кӑтартнӑ. Тепĕр çĕрте вагон мĕн чухлĕ груз йӑтма пултарнине çырса хураççĕ.

Ĕçĕ хӑйсен тĕлĕнмелле хӑвӑрт пулса пырать, сиссе те юлмалла мар: халь çеç вагон стени çинче нимĕн те çукчĕ, таптасахчĕ вӑл, пусма çинчи хĕрарӑм хӑрах аллинчи трафарета (саспаллисемпе цифрӑсем касса кӑларнӑ тимĕр хӑмана) стена çумне тытса тепĕр аллинчи шлангран чаш! тутарать те — мĕн кирли çырӑнса та ларать.

—Асӑрхӑр-ха, фокус кӑтартакан артистсем пекех ĕçлеççĕ вĕт,— терĕ пирĕнпе çӳрекен инженер.

Эпир кунпа пĕр сӑмахсӑрах килĕшрĕмĕр. Чӑн та, çав тери хӑвӑрт та тĕлĕнмелле ӑста ĕçлеççĕ!

Ун чухне эпир кунти питĕ опытлӑ работница Прасковья Степановна Терентьева ертсе пыракан коммунизмла ĕç бригадин участокĕнче пулнӑ-мĕн.

Қӑнтӑрлахи смена пĕтсен эпир çак икĕ бригадӑн — малярсемпе трафаретчиксен бригадисен бригадирĕсемпе, Фекла Ивановна Думкинӑпа тата Прасковья Степа-

новна Терентьевăпа ятарласа тĕл пултă-мăр. Ĕç хыççăн вĕсем душра çăвăнса таса тумсем тăхăннăччĕ ĕнтĕ — паçăрхипе танлаштарсан палламалла та мар, нихçан та сăр тавраш̆ĕ патне пыман, тейĕн. Иккĕшĕ те тап-таса, çӳçĕсене тирпейлĕн тураса çивĕтлесе хунă, капăр кофтисем айĕнчен шап-шурă çухависем курăнаççĕ. Вĕсем тин çеç ĕçрен тухнă пек мар, пĕр-пĕр вечера е хăнана кайма хатĕрленнĕ пекех туйăнаççĕ. Хăйсене яланах тирпейлĕ те таса тытма хăнăхнă хĕрарăмсем çавăн пек çав вĕсем...

Çак хĕрарăмсем иккĕшĕ те заводра нумайранпа — çирĕмшер çул ытла ĕçлеççĕ. Фекла Ивановна Думкина, Киров облаçĕнче çуралса ӳснĕскер, кунта 1937 çулта килсе кĕнĕ. Малтанах чылай хушă трафаретчик пулса ĕçленĕ.

— Ун чухне ку ĕç питĕ кансĕрччĕ, — тет вăл, — мĕншĕн тесен хальхи пек пульверизаторпа сирпĕтсе çырман, кашни саспаллине уйрăм, кисточкăсемпе сĕр се çырнă. Кун каçа алă сыпписем тӳсме çук ывăнса, ним пĕлми пулса çитетчĕç...

Унтан вара маляра куçнă. Вунçичĕ çул хушши ĕнтĕ вăл вагонсем сăрласа пурăнать. Бригадирта — ултă çул. Унăн бригадинче тăватă çын. Вĕсем мĕнле ĕç-

лени çинчен ыйтсан, Фекла Ивановна ним тытăнса тăмасăрах калать:

— Нихăшне те хурламастăп. Пурте лайăх ĕçлеççĕ. Лида Егорова та, Лиза Абрамова та, Тоня Боровкова та, Маруся Зиатдинова та... Пурте вашават! Тата, тĕрĕссипе каласан, пирĕн сӳрĕк ĕçлеме майĕ те çук, мĕншĕн тесен пире, хăй каларĕш, хыçран тĕксех пыраççĕ — вагон хыççăн вагон пырса тăрать. Пĕрине сăрласа çитереймен-ха, пăхан — теприне кустарса пыраççĕ. Завод вагонсем юсамалли плана пĕрмай иртсерсе тултарать, вĕсем цехран пирĕнсĕр, эпир сăрламасăр тухса кайма пултараймаççĕ вĕт-ха. Ну, хăвăртрах çаврăнкалама тивет те вара пире. Тепĕр чух апат çиесси çинчен те манса каятăн...

— Итлĕр-ха, Фекла Ивановна, эсир ĕçленĕ чух сăр нумай перекетлетĕр, теççĕ. Мĕнле майпа пулса пырать ку?

— Ара, вăл халăх пурлăхĕ те-ха, перекетлес пулать çав, — тет Думкина. — Кашни кунах икĕ-виçĕ вагон сăрламалăх перекетлетпĕр. Анчах кун çинчен сăмахпа каласа ăнлантарма йывăр, унта ĕçен мелне пĕлес пулать...

Çирĕм çул ытла ĕçлесе Фекла Ивановна ĕç мелĕсене питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ,

çавăнпа ĕнтĕ унăн аллинче ĕç «çунса» кăна тăрать. Çакăншăнах, ĕçре пит ăста пулнăшăнах, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеп грамотипе, Çул-йĕр министерстви «Отличный вагонник» значокпа наградăланă, завком темиçе хут та хаклă парнесем пана. Çавсене тивĕçлĕ пулнă ĕнтĕ вăл...

Халĕ Фекла Ивановна бригади çине тăрсах коммунизмла ĕç бригади ятне илессишĕн ăмăртать.

Прасковья Степанова Терентьева Канаша завод тума тытăннă кунсенчех, 1934 çултах килнĕ. Темле ĕçре те пулса курнă вăл малтанхи вăхăтра. Çĕр те чавнă, кирпĕч те йăтнă, бетон та çăрнă, пĕр хушă, сывлăхĕ начарлансан, уборщицăра та ĕçленĕ. Вăрçă вăхăтĕнче вара çак цеха пырса кĕнĕ те — паянхи кун та çавăнтах ĕçлет. Темиçе çулталăк маляр пулнă — вагонсем сăрланă, 1947 çултан пуçласа трафаретчица пулса тăнă.

— Эпир вагонсене «паспорт» парса кăларса яратпăр. Вагонсене хуть те ылтăнран тунă пултăр — пирĕн трафаретсемсĕр вĕсене пурпĕр никам та йышăнмасть, — куларах каласа парать Прасковья Степановна.

Ку чăн та çапла. Трафаретсем — вагонăн тĕп «документчĕ», унăн «çул хучĕ». Çавăнпа та вĕсем яланах тĕрĕс те вырăнлă пулмалла, унсăрăн аван мар япаласем пулма пултараççĕ. Пирĕнпе тĕл пулнă кунах Терентьева бригадинче пĕр цифрăна ăнсăртран йăнăш çырса хунă иккен те, çавна астуса илсе, бригадир пусма йăтсах «Иккĕмĕш Ҫанаша» чупнă — йăнăша тӳрлетме. Юрамасть йăнăш çырса яма!

Питĕ туслă, пĕр каварлă, пĕр кăмăллă пулса ĕçлет Терентьева бригади. «Пĕри — пуриншĕн, пурте — пĕриншĕн», — çавăн пек вĕсен пурнăçĕн тĕп йĕрки.

Çĕршыври малта пыракан предприятисенче коммунизмла ĕç бригадисем туни çинчен хыпар сарăлсан, Прасковья Степановна тӳрех хăйĕн юлташĕсемпе калаçма тытăннă:

— Атьăр, тусăмсем, эпир те çав хисеплĕ ята илсе ĕçлекен пулар!

Çулталăк хушши пынă хастарлă кĕрешӳ. 1960 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче вара цехри рабочисен пухăвĕ пĕр сасăпах йышăннă:

— Терентьева бригадине коммунизмла ĕç бригади ятне илме тивĕçлĕ тесе шутлас!

Ку пурне те хытă савăнтарнă. «Вагонник» хаçатăн çав кунсенче тухнă номерĕнче çав тери кăмăллă ӳкерчĕк пур: П. Терентьева бригади — Т. Исакова, Н. Храмова тата М. Ягофарова хăйсене коммунизмла ĕç бригадин ятне панă хыççăн малашне тата лайăхрах ĕçлесси çинчен шăкăл-шăкăл калаçса лараççĕ., Çав кунсенчех тата тепĕр пысăк савăнăç пулнă вĕсен: Çул-йĕр министерстви бригадира ылтăн сехет панă, бригадăн ытти членĕсене завком укçапа премиленĕ.

— Премисем пирки кӳренмелли çук пирĕн, — тет Прасковья Степановна, — кашни праçникрех мĕн те пулин парӑççĕ...

— Хăвăртан килет ĕнтĕ вăл, хăвăр лайăх ĕçлениччен, — тетпĕр эпир.

— Хамăр та тăрăшатпăр çав, — килĕшет бригадир. — Ĕçне те лайăхрах та хăвăртрах туса пыма тăрăшатпăр, — ку таранччен производствăна пирĕнтен нимĕнле чăрмав та пулман-ха, — сăрне те, лакне те тирпейлĕ тыткалатпăр, кашни уйăхрах перекет пулать...

Вăрахчен калаçса ларатпăр эпир заводра юсанă вагонсене тулашĕнчен илемлетсе, вĕр-çĕнĕ тĕслĕ туса, вăрăм çулсем тăрăх нумай-нумай чупма «паспорт» парса кăларса яракан икĕ бригадирпа. Вĕ-

сем пире хӑйсен кулленхи пурнӑҫӗпе малашнехи ӗмӗчӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ.

— Ӗҫлесчӗ-ха вӑй пур чух, тата нумайрах та лайӑхрах ӗҫлесчӗ,— теҫҫӗ иккӗшӗ те.

Хӑйсен куҫӗсем ҫав вӑхӑтра кӑмӑллӑн ҫуталса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫине пӑхатӑн та, ҫак сӑмахсене вӗсем чун-чӗререн каланине туятӑн.

## ХАЛĂХ ТУСĔ, ТУХТĂР...

Поликлиника, больница, медпункт. Тухтăр. Фельдшер. Медсестра...

Хамăр чипер сывă чухне эпир вĕсене аса та илместпĕр. Хăшĕсем, «тимĕр пек çирĕп» сывлăхлисем, хăш чухне кăштах вĕçкĕнленсе, çапла та калаççĕ:

— Маншăн пулсан, медицина хуть пур вăл, хуть çук...

Анчах та çакăн пек çăмăллăн калаçасси вăл çын пĕрре лайăххрах чирлесе ӳкиччен кăна пулать. Хытăрах халсăрлансан, пĕтĕм шăмшак «çĕмĕрĕлме», вар-хырăм «касма» тытăнсан, мĕнле те пулин аманмалла, суранланмалла пулсан е ача-пăча тăрук чирлесен, тӳрех больницăна, тухтăрсем патне васкатпăр. Вĕсем патĕнче хамăр валли çăмăллăх, çăлăнăç шыратпăр. Ытлах та йывăр килнĕ самантсенче тухтăрсем çине вĕсен аллинче пирĕн асап-

сене пĕтерекен асамлă вăй пулнă пекех пăхатпăр.

— Тархасшăн пулăшăр, тухтăр... Ĕмĕр-ĕмĕр тав туса пурăнăп мана сыватса çын тусассăн!

Чăнах та тав тăватпăр вĕсене. Пĕтĕм чунтан, чĕререн спаççипă калатпăр. Çырусем çыратпăр вĕсем патне, хаçатсенче çырса кăларатпăр. Тепĕр чух вуншарăн алă пусатпăр.

— Больницăра выртнă чух мана çав-çав тухтăр, çав-çав сестрасем калама çук тимлĕн эмеллерĕç, питĕ лайăх пăхрĕç, вĕсене пула кăна эпĕ ура çине тăрса, каллех ĕçлекен пултăм. Ырлăх-сывлăх пултăрах вăл çынсене!..

Тухтăрсем нумай пирĕн. Вĕсене пулăшакан фельдшерсемпе сестрасем тата нумайтарах. Çулсерен çĕнĕрен çĕнĕ больницăсем, тĕрлĕрен медпунктсем уçăлаççĕ. Партипе правительство халăх сывлăхĕшĕн нимĕн те хĕрхенсе тăмаççĕ. Никита Сергеевич Хрущев сăмахĕсемпе каласан, «ĕççыннисен сывлăхĕшĕн тăрăшассине государство пĕтĕмпех хăй çине илет».

Больницăсен, вĕсенчи койкăсен хисепĕ хуласенче, промышленность районĕсенче кăна мар, ялсенче те хăвăрт ӳссе пырать. Тĕрлĕ ăрăмçăсен, чĕлхе суракансен, «вар

шăлакансен», эпи-карчăксен, пур чирсенчен те армути шывĕпе «сыватакансен» ĕмĕрĕ тахçанах иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Чирлесен çавсем патне «сывалма», тĕрĕсрех каласан, хăйсен сывлăхне тĕппипех пĕтерме каякансем халĕ пинрен пĕрре те тупăнмасть пулĕ.

Ялсенчи больницăсенче хальхи вăхăтра хăйсен ĕçне тĕплĕн пĕлекен, медицина наукин чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă куракан, пысăк квалификациллĕ тухтăрсем ĕçлеççĕ. Больницăсенче çынсене чир-чĕртен сыватма пулăшакан оборудовани те пуянланса пырать. Унта та халĕ, пысăк хуласенчи пекех, чи кăткăс операцисем тума пултараççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ку чухне ялта та пĕтĕм çĕршыври пекех, çынсем вилесси çултан-çул чакать, çураласси ӳсет, халăх йышĕ хăвăрт хутшăнать.

Кăткăс та ответлă тухтăрсен ĕçĕ, мéншĕн тесен вĕсен аллинче — этем сывлăхĕ, унăн пурнăçĕ. Çав вăхăтрах, мĕн тери хисеплĕ те чыслă вăл ĕç!.. Тухтăрсем пурнăçшăн, вилĕме хирĕç кĕрешеççĕ вĕтха, этемшĕн чи хаклине — пурнăçа хăтараççĕ, вилĕме çĕнтереççĕ. Мĕн пур ĕнтĕ çакăнтан пархатарли?..

Анчах тухтăрсем хăйсен ĕçне пур чух та лăпкăн, шăв-шавсăр туса пыраççĕ.

Чапа тухасси мар, çынсем умĕнче уйрá-
мах паллă пуласси мар вĕсен ĕмĕтĕнче. Вĕсене этеме юратни хавхалантарать, пĕр çав туйăм кăна малалла туртать. Этеме çăлни, ăна хаяр чир аллинчен туртса илни вĕсемшĕн чи пысăк телей. Çакăншăн вĕсем ырми-канми ĕçлеççĕ, шартлама сивĕре те, çил-тăман витĕр те, сиксе çăвакан çумăр айĕн те, сĕм çĕрле те, ниме пăхмасăр, тепĕр чух хăйсен сывлăхне хĕрхенмесĕр чирлĕ çынсем патне тухса каяççĕ, вĕсене пулăшаççĕ, çăлаççĕ...

Епле тав тумастăн-ха вĕсене, епле пурне те илтĕнмелле каласмастăн-ха вĕсен ырă ĕçĕсем çинчен?..

Çак очеркра пирĕн çавăн пек çынсенчен пĕри — Арапусĕнчи участок больницин аслă врачĕ Галина Ивановна Тимошенко çинчен каласа кăтартас килет.

* * *

Галина Ивановна ятне эпир чăн малтан Обком секретарĕн кабинетĕнче илтрĕмĕр. Сăмах республикăри паллă çынсем çинчен кĕнеке çырасси пирки пыратчĕ. Хăйĕн умĕнче малтан хатĕрлесе хунă нимĕнле список та пулман пулин те, Обком секретарĕ çĕнĕ стройкăсенче, тĕрлĕ фабрикăсемпе заводсенче, колхозсен-

че пултаруллă та ăнăçлă, чунне парса ĕçлекен нумай çынсен ячĕсене асăнчĕ.

— Вĕсем çинчен пирĕн пĕтĕм халăх пĕлсе тăмалла, ма тесессĕн вĕсем пирĕн пурнăçри маяксем, ыттисен вĕсемпе танлашма тăрăшмалла,— терĕ секретарь.— Паллах, кĕнеке çырнă чух культура фронтĕнче ĕçлекенсене те, халăх сывлăхĕшĕн кĕрешекенсене те манмалла мар, коммунизм строительствинче вĕсем те çав тери пысăк вырăн йышăнаççĕ...

— Тухтăрсенчен эсир уйрăмах кам çинчен çырма сĕннĕ пулăттăр? — ыйтрăмăр эпир.

— Вăрмар районĕнче Тимошенко хушаматлă хĕрарăм-тухтăр пур. Ялта ĕçлет. Çавă питĕ тивĕçлĕ çын, — пĕр тытăнса тăмасăрах ответ пачĕ секретарь.

...Вăрмара çитсен эпир райкомăн пĕрремĕш секретарĕ Василий Ефимович Кузнецов патне кĕтĕмĕр. Хамăр мĕн пирки килнине каласа парсанах, вăл пирĕн шухăша ырларĕ:

— Тĕрĕс тăватăр! Пирĕн Галина Ивановна — чăн-чăнах питĕ лайăх çын, ăна пĕтĕм район хисеплет. Вăл ăста врач кăна мар, пысăк общественник. Райком членĕ, райсовет депутачĕ, райсовет исполкомĕн членĕ. Яланах ĕçре çунать —

ăпланса ларнă пĕр сехет те çук пуле унăн. Вăл ертсе пыракан больница халĕ коммунизмла ĕçлекен коллектив ятне илессишĕн кĕрешет. Пĕлтĕр ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç... Патне кайсан хăвăрах куратăр акă вăл мĕнле çын иккенне. Анчах паян килте-ши-ха вăл? Шăнкăравласа пăхам-ха малтан. Часчасах ялсене тухса çӳрет вăл, фельдшер, акушер пункчĕсене, ача çуратмалли çурт-сене тĕрĕслет, кăтартусем парса пулăшса хăварать...

Пирĕн телее, Галина Ивановна хальхинче килтех пулнă. Тепĕр сехетренех эпир унпа куçа-куçăн паллашрăмăр. Чирлисене йышăнакан пӳлĕмрен пире хирĕç яштака та çӳлĕ, çавракарах питлĕ, хăюллă пăхакан кăвак куçлă илемлĕ хĕрарăм тухрĕ. Шурă калпак айне пытанайман сарă çӳçĕсенче кĕмĕл тĕслĕ пĕрчĕсем нумай палăраççĕ. Анчах сăнран пăхсан, ку çыннăн кăвакармалли вăхăт çитмен пек-ха. Эппин, кăвакарма сăлтавĕ пулнă-тăр.

Аслă врач кабинетне кайса темиçе минут хушши калаçсанах, Галина Ивановна каялла кайма хатĕрленчĕ.

— Каçарăр, мана лере чирлĕ çынсем кĕтеççĕ, — терĕ вăл. — Пирĕн пĕр врачĕ

чирленӗ те икӗ çыншăн ĕçлеме тивет-ха паян. Халăхĕ чылай пухăннă, тĕттĕм пуличчен пурне те йышăнас пулать...

— Кайăр, кайăр, чирлисене ытлашши кĕтсе лармалла тăвас мар, — терĕмĕр эпир.

— Халлĕхе акă, пирĕн больницăн ĕçĕсемпе паллашăр... — Галина Ивановна пирĕн умма хулăн тетрадь кăларса хучĕ. Унта больница мĕнле ĕçлени çинчен кашни çул çырса пынă отчетсем мĕн.

Арапуçĕнчи больница темле малта пыракан шухăшлă çынсем тăрăшнипе Октябрьти революцичченех уçăлнă иккен. Анчах ун чухне кунта пĕр тухтăрпа тепĕр фельдшер кăна ĕçленĕ. Пур чирсенчен те çавсем иккĕшех эмелленĕ. Чирлисене вырттармалли вырăнсем те пилĕк-улттă кăна пулнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче, уйрăмах вăрçă хыççăнхи çулсенче, ку больница нумай саралнă, унăн ĕçĕ анланса пынă. Унта халĕ пĕр вăхăтрах аллă çын выртма пултараççĕ. Чирлисене тĕрлĕ специалистсем йышăнаççĕ, — кунта терапевт та, хирург та, гинеколог та, ача-пăча тухтăрĕ те, куç тухтăрĕ те, шăл тухтăрĕ те пур. Нимрен те пахи — больницăра кирлĕ оборудовани, аппаратура (рентген ап-

парачĕ т. ыт.) пурри, вĕсем тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлени.

Больница участокне 12 ял кĕрет, унăн тавралăхĕ 19 километр. Участокра виçĕ ял Совечĕ, пысăклатнă тăватă колхоз, пахча çимĕç типĕтекен завод, 12 шкул. Пĕтĕмпе участокра 15 пин çынна яхăн пурăнать. Сахал йышах мар ку! Больницăра ĕçлекенсен вунпилĕк пин çын сывлăхне сыхлас пулать вĕт, вунпилĕк пин çыншăн ответ тытас пулать!

Чăн та, больницăна халăх сывлăхне упрас ĕçре пулăшакан «иккĕмĕш сыпăкри» учрежденисем пур: фельдшерпа акушер пункчĕсем тăххăр, колхозсенчи ача çуратмалли çуртсем иккĕ, колхозри амбулатори пĕрре. Анчах вĕсене те хăйсем тĕллĕн ĕçлеттерме май килмест, вĕсен ĕçне сăнасах, тĕрĕслесех тăмалла, пĕрмай вĕрентсе, кăтартусем парса, ертсе пымалла. Никамран малтан, вĕсен ĕçĕшĕн участокри больницăн аслă врачĕ ответ тытать. Ĕçлемелĕх пур вĕсемпе!

* * *

Галина Ивановна каçченех пушанаймарĕ. Малтан чирлисене йышăннă вăл — ун валли вăхăт нумай кирлĕ вĕт, кашнинех тĕплĕн пăхмалла, тĕрĕслемел-

ле, ыйтса пӗлмелле, канаш памалла. Больницӑна пынӑ чирлӗ ҫын хӑй пирки пӗтӗмпех пӗлесшӗн, унпа ҫиелтен кӑна калаҫма май килмест, юрамасть те тата... Унтан аслӑ врач палатӑсене пӑхса ҫаврӑннӑ, кухньӑна та кӗрсе тухнӑ, завхоза та хӑтӑрса илнӗ, шоферсемпе те вӗсен ырап ӑҫта каймалли ҫинчен калаҫнӑ. Больница хуҫалӑхӗ пӗчӗк мар ҫав!

Каҫхине тин, больницӑн пӗчӗкҫеҫ электростанцийӗ шултра калибрлӑ пулемет пенӗ пек сасӑ кӑларса ҫутӑ парсан, тем ҫӳле́ш юман тӑррине хӑпартса ҫакнӑ хӗрле ҫӑлтӑр («Кремль ҫинчи пек!..» тесе, тулли кӑмӑлпа мухтанаҫҫӗ унпа монтерсем) ялкӑшма тытӑнсан ҫеҫ Галина Ивановнӑпа хире-хирӗҫ ларса калаҫма май килчӗ.

Хамӑрӑн ӗмӗрте пире сахал мар ҫынсемпе ҫавӑн пек калаҫма, хӑйсен пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен ыйтса пӗлме тӳр килнӗ. Эсӗ хаҫатран пынине пӗлсен, теприсем хавхалансах, ҫунатлансах каласа параҫҫӗ, хӑш чух хӑйсен ӗҫӗсене ытлашширех те илемлетме тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсем каланисене ҫырса пыма та ӗлкӗрмелле мар.

Хальхинче пачах урӑхла пулчӗ. Галина Ивановна хӑйӗн ҫинчен калаҫма пачах юратмасть иккен. Хуть те мӗнле ый-

ту хускатсан та, хăйĕн ĕçĕсем пирки мар, ыттисем çинчен каласа пама тытăнать. «Эп çапла турăм» тенине унран пĕрре те илтме пулмарĕ, вăл ялан «эпир çапла турăмăр», тет, пĕтĕмпех коллектив çине ярать.

Пĕр енчен ку тĕрĕс те ёнтĕ, мĕншĕн тесен больница пек учреждение, куллен çĕршер çынсем хăйсен нушисемпе пырса тăнă çĕрте, пĕр пĕччен çын нимĕнех те тăваяс çук, больницăри кăткăс та нумай енлĕ ĕçсене коллектив çеç ăнăçлă туса пыма пултарать. Анчах коллектив тенине пĕр çĕре пĕтĕçтерсе пĕр кăмăлпа ĕçлекен тума, ертсе пыма, вĕрентме, çул кăтартса пыма, çав вăхăтрах çынсене лайăх ĕçлеме условисем туса пама пĕлмелле-çке, унсăрăн малалла кайма май çук! Çак енчен илсен, Галина Ивановна Тимошенкăн паха ĕçĕсем, унăн пултарулăхĕ, хастарлăхĕ, хуть те мĕнле ĕçе те вĕçне çитиччен тума пĕлни кашни утăмра тенĕ пекех курăнса тăрать.

...Чечеклĕ Украинăра, Винница облаçĕнчи ялти учитель çемйинче çуралса ÿсеснĕскер, 1939 çулта Харьковри медицина институтĕнчен вĕренсе тухса врач дипломне илсен, вăл упăшкипе пĕрле (упăшки те врач пулнă, вĕçем пĕрле вĕренсе

тухнӑ) тӳрех Чӑваш республикине, Етӗрне хулине килнӗ. Малтан районти больницӑра ӗҫленӗ, унтан, упӑшкине Совет Ҫарне мобилизацилесен, ун вырӑнне хирурги больницине куҫнӑ. Диплом тӑрах вӑл педиатр, ача-пӑча тухтӑрӗ пулнӑ, халӗ хирурги енӗпе ӗҫлеме тивнӗ, анчах хастарлӑ, ӗҫре ӳссе пырас ӗмӗтпе пурӑнакан ҫамрӑк тухтӑра ку пӗрре те хӑратман. Вӑл тӑрӑшнӑ, вӗреннӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансанах хирурги больницин заведующине фронта илсе кайнӑ та, ун вырӑнне Тимошенкӑна шанса панӑ, вара мӗн вӑрҫӑ пӗтиччен'ех заведующи пулса ӗҫленӗ.

Пӗлетпӗр-ха ӗнтӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пурне те питӗ йывӑр килчӗ, анчах темле хӗн пулсан та, хамӑр ҫӗнтерессе чун-чӗререн ӗненсе, совет ҫыннисем пӗтӗмпех тӳссе ирттерчӗҫ. Ҫамрӑк тухтӑрӑн та нумай тӳсме тивнӗ. Ӗҫ ҫав тери нумай пулни ҫинчен каламастпӑр та ӗнтӗ. Хулара тухтӑрсем ҫитменнипе вӑл, хирурги больницине ертсе пынисӗр пуҫне, хула ҫывӑхӗнчи ялсене пулӑшакан врач участокӗн заведующийӗ, юн паракан пункт заведующийӗ пулнӑ, ача ҫуртӗнчи тухтӑршӑн ӗҫленӗ, эрнере темиҫешер хут военкоматра фронта каймалли ҫынсене пӑхнӑ. Ҫав

вăхăтрах халăх хушшинчи обществăлла ĕçсене те туса пыма тивнĕ — лекцисем, докладсем вуланă...

— Килтен ирхине ирех, тул çутăличченех тухса каяттăм та çурçĕр çитеспе тин таврăнаттăм. Юрать-ха, çамрăк пулнă, аптраман, — аса илет халь Галина Ивановна.

Ку çеç те мар-ха. Вăрçă вăхăтĕнче унăн хэйĕн пурнăçĕнче те нумай хуйхă-суйхă пулнă. Вăрçă пуçлансан пĕр-ик эрнеренех вăл çуралса ÿснĕ çĕршыва фашистсем пырса çитнĕ. Унта Галина Ивановнăн ватă ашшĕпе амăшĕ, çывăх тăванĕсем юлнă... Мĕн пулнă вĕсемпе, ăçта кайса кĕнĕ вĕсем — нимĕн те паллă пулман.

— Радио тăрăх кулленех нимĕçсем Украинăра çав тери тискер ĕçсем туни, пирĕн çынсене çĕршерĕн те пиншерĕн персе вĕлерни, хуласемпе ялсене çунтарни çинчен каласа паратчĕç те, манăн хăш чух сывлăш та тухми пулса çитетчĕ çав, ĕçрен темле ывăнса таврăнсан та çĕрĕçерĕпе çывăраймастăм...

Хура кĕркунне тин кăштах лăпланнă вăл — ашшĕпе амăшĕ юлашки пăрахутпа Етĕрнене çитсе ÿкнĕ. Анчах кун хыççăн тепĕр хурлăх сиксе тухнă — вăрçăри упăшки питĕ йывăр чирлесе госпитальте

выртнă, вăл сываласса шанма та май пулман. Юлашкинчен Галина Ивановна ăна хам пăхатăп тесе киле илсе килнĕ, анчах лешĕ нумай та пурăнайман...

Çапах та хăйне мĕн тери йывăр пулнине вăл ĕçре палăртман, иртен пуçласа каçченех ĕçре çуннă. Çав вăхăтрах парти кандидатне кĕнĕ, 1944 çулта члена куçнă. Аслă Ленин партийĕн членĕ пулни ăна тата ытларах, тата лайăхрах ĕçлеме вăй панă.

Йывăр кунсем иртсе кайсан Галина Ивановна Шупашкар поликлиникине куçнă, темиçе уйăхран ăна Куславккана, районти сывлăх пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме янă. Çулталăкран, хăй çине тăрсах ыйтнипе, ăна Беловолжски салинчи больницăна куçарнă. Пур çĕрте те ырă ят илмелле ĕçленĕ, халăх хушшинче хисеплĕ пулнă. 1949 çулта, Арапуçĕнчи участок больницинче хирург питĕ кирлĕ пулсан, унта куçса кайнă. Çур çул пек вăхăт иртсен, сывлăх министерстви приказĕ тăрăх ăна аслă врач туса хунă. Унтанпа ĕнтĕ вуникĕ çул çитет...

* * *

Мĕнлерехчĕ ку больница эсир килсе кĕнĕ чух? —тесе ыйтатпăр эпир Галина Ивановнăран.

— Ун чухне пирӗн ҫӗршыв вӑрҫӑ кӳнӗ сурансене те тӳрлетсе ҫитереймен те-ха... Ӑпӑхрахчӗ ҫав, — терӗ вӑл, кӑштах шухӑша кайнӑ пек пулса. — Оборудовани, тӗрлӗ инструментсем сахалччӗ, вӗсем те пӗтӗмпех кивелсе ҫитнӗ. Чирлисен вырӑнӗсем ҫине сармаллисем, витӗнмеллисем — утиле пама кӑна юрӑхлӑччӗ. Ҫурчӗсене вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа та ремонт туман. Электричество ҫук — каҫхине краҫҫын ламписсем кӑна, вӗсем те ҫителӗксӗр. Шывсӑр аптраттӑмӑр — пичкепе нумаях турттарса ҫитереймӗн! Больницана йӗркеллӗ ӗҫлекен тума чӑн малтан ҫав ҫитменлӗхсене пӗтермелле пулна. Ҫавӑнтан тытӑнтӑмӑр та эпир...

Паллах ҫав, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пур енчен те чухӑнланса ҫитнӗ больницӑран чӑн-чӑн больница тума нумай вӑй хумалла пулнӑ!

Малтанхи вӑхӑтра укҫине те сахал панӑ, кирлӗ япалисене тупма та питӗ хӗн пулнӑ.

— Час-часах эпӗ врачран хуҫалӑх ҫынни, снабженец пулса тӑраттӑм, — тет Галина Ивановна. — Ӑҫта кӑна ҫитмен, ӑҫта ҫырман, кампа кӑна тавлашман пулӗ хамӑр больницӑна хуҫалӑх, оборудовани енӗпе кӑштах та пулин «пуянлатас»

тесе! Хӳме тӳрлетме кирлӗ пулнӑ пӑтишӗн те ҫапӑҫма тивнӗ те...

Анчах хӑйне шанса панӑ ӗҫшӗн ҫунакан ҫын хӑй мӗн шутланине тӑватех. Аслӑ врач тӑрӑшнипе больница чӑнах та пуянланнӑ. Вӑл электростанци лартнӑ, ҫӗре аллӑ метр ытла чавса кӗрсе лайӑх ҫӑл тунӑ. Аппаратура туса рентген кабинечӗ йӗркеленӗ, — больницӑшӑн ку нимрен те хаклӑ ӗнтӗ! Хирурги, гинекологи, ача-пӑча чирӗсен кабинечӗсем валли те кирлӗ оборудованипе инструментсем туяннӑ. Нумайранпа пӗр пӑта та пырса ҫапман ҫурчӗсене те ҫӗнетнӗ, больница участокӗ тавра ҫӗнӗ хӳме тытса ҫаврӑнна. Унтан больница тавралӑхне симӗслентерме, илемлетме тытӑннӑ: сад лартнӑ, чи лайӑх йышши улмуҫҫисем, чие, слива, хурлӑхан ӳстернӗ, клумбӑсем туса тӗрлӗрен тӗрлӗ чечексем хунаттарнӑ. Ҫак пархатарлӑ ӗҫсене укҫа тӑкакламасӑрах, больницӑра ӗҫлекенсен вӑйӗпех туса пынӑ...

— Чирлӗ ҫын хӑвӑрт сываласси унӑн кӑмӑлӗ мӗнлерех пунинчен те килет. Вӑл пӗрмай салху пулсан, хуйхӑрать пулсан — час сываласса ан кӗт, анчах та ҫын кӑмӑлӗ ҫӑмӑлтарах, савӑнӑҫлӑрах пулсан — пачах урӑхла,— тет Галина Ива-

новна. — Хăвăрах пĕлетĕр — хитре те ырă шăршлă чечексене хуть те мĕнле çын та юрататъ, вĕсем такамăн кăмăлне те çĕклеме пултараççĕ. Çавăнпа ĕрчететпĕр те эпир вĕсене...

Пирĕн сăмах чирлисене куллен мĕнле эмеллени, уйрăмах, сасартăк йывăр чирлесе ӳкнисене мĕнле пулăшни, Галина Ивановна хăй мĕнле ĕçлени çине куçать. Калаçу вăхăтлăха чарăнса ларать, мĕншĕн тесен Галина Ивановна нимĕнле ĕç тунине те пĕр хăй çине илесшĕн мар.

— Пирĕн — коллектив... Ĕçри кашни ӳсĕм — вăл пĕчĕкçеç пулсан та — коллектив çĕнтерĕвĕ, — тет вăл.

— Анчах та чирлĕ çынсене эсир хăвăр та йышăнатăр-çке, хăвăр та эмеллетĕр! Çитменнине, эсир — хирург, хирургăн час-часах чирлĕ çыншăн пĕр-пĕччен ответ тытма тивет, — тетпĕр эпир.

Тинех вара Галина Ивановна хăйĕн врач ĕçĕнчи хăшпĕр фактсем çинчен каласа парать.

— Тепĕр чух сасартăк питĕ йывăр чирленисене илсе килеççĕ те, вĕсене тӳрех операци тумалли сĕтел çине хума тивет... Акă, пĕррехинче сакăр уйăхри хĕрачана илсе килчĕç. Вар-хырăмпа аптранă вăл, вилес патнех çитнĕ, аран-аран сывлать.

Ачан çинĕ апат пыршăсем тăрăх шуман, пыршисем явăнса ларнă-мĕн. Ăна çийĕн чех операци туни çеç çăлма пултарнa. Анчах сакăр уйăхри ачашăн кун пек операци хăрушă, ача ăна тӳсеймесен те пултарать... Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ? Қапла та пит начар, апла тусан та хăрушлăх питĕ пысăк. Вара эпĕ, иккĕленерех пулин те, операци турăм. Çав тери кăткăс операци пулчĕ вăл. Шанчăк сахалтарахчĕ. Çапах та ача сывалчĕ. Халь пысăк ĕнтĕ, час шкула чупма пуçлать...

— Теприпче, çурçĕр иртсен виçĕ сехетре, Чупайран пĕр 22 çулхи колхознике илсе килчĕç. Язва пулнипе унăн варĕ шăтнă, питĕ йывăр. Халех, пĕр самант тăхтамасăрах, операци тумалла. Сехет те çурă тăрмашрăм унпа... Сывалчĕ!

— Ветродвигатель патĕнче ĕçлекен пĕр çамрăк хĕрĕн аллине шестернепе çĕмĕрсе тăкнăччĕ. Пĕр шăмă та тĕрĕс-тĕкел юлман, алли кипке пек çакăнса тăрать. Шăмă ванчăкĕсене сыпăнтарма вăрахчен асапланма тиврĕ. Пӳрнисене те майлаштартăм. Қайран вăл çав алăпа чип-чиперех ĕçлекен пулчĕ...

Çакăн пек кăткăс та ответлă операцисем Галина Ивановна вуникĕ çул хушшинче питĕ нумай тунă иккен, сахал мар

çынсене сыватса, çĕр çинче каллех савăнса пурăнакан тунă.

— Мĕн тери тав тăваççĕ пуль сире вăл çынсем! — тетпĕр эпир.

— Пур ун пеккисем... — именнĕ пекрех хуравлать тухтăр. — Кайран çырусем çыраççĕ. Мана çеç мар, ыттисене те тав тăваççĕ. Лайăх ĕçлекенсем сахал мар пирĕн.

Вăл хăйĕн ĕçри юлташĕсем çинчен каласа пама тытăнать. Хавaслансах, васкасах калать, çав çынсене вăл чунтан кăмăллани кашни сăмахрах сисĕнет. Пуринчен малтан, вăл больницăри акушер-гинеколога, Анастасия Константиновна Константиновăна асăнать.

— Тĕлĕнмелле биографи унăн, роман çырмалăх та пур! — тет вăл. — Пĕлетĕр-и, вунçичĕ çула çитиччен вăл пачах та хутла пĕлмен, пĕр саспалли те палламан. Анчах совет влаçĕ пулса тăрсанах вĕренме тытăннă та, сыпăкран сыпăка хăпарса пырса, тухтăра çитнĕ... Халь вăл çав тери пысăк опытлă врач, хăйĕн ĕçне питĕ лайăх туса пырать. Халăх хушшинче те нумай ĕçлет — пĕрмай ялсене кайса калаçусем, лекцисем ирттерет. Колхозниксем ăна яланах юратса итлеççĕ... Шел, пен-

сие каймалли вăхăт ҫитет унăн. Ахаль те ĕнтĕ Вăрмар районĕнче ҫирĕм ҫичĕ ҫул ĕҫленĕ те...

Ҫамрăк тухтăрсем ҫинчен те Галина Ивановна ăшă кăмăлпа каласа парать. Акă Мелания Петровна Петрова, терапевт, Арапуҫ больницинче вунă ҫул пĕр шăйрăксăр ĕҫлет. Куҫ чирĕсене те лайăх пĕлнĕ май, вăл районта трахомăна пĕтерес енĕпе нумай тăрăшнă. Ҫавăншăн панă та ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотине.

Федор Васильевич Заплаткин та — ача-пăча тухтăрĕ, рентгенолог — вунă ҫул ытла ĕҫлет ĕнтĕ. Больницăра чирлисене йышăннисĕр пуҫне, пĕрмаях халăх хушшинче пулать, профилактикăлла ĕҫсем нумай тăвать...

Калаҫура Галина Ивановна больницăри вăтам медперсонала — фельдшерсене, сестрасене те нумайăшне ырлать.

— Вĕсем — пире пулăшакансем, пирĕн шанчăк, вĕсемсĕр эпир нимех те тăваймастпăр вĕт...

Аслă сестра Валентина Нестерова, акушерка Алевтина Нестерова, Зоя Милаевăпа Екатерина Кузьмина лаборанткăсем, Зинаида Кириллова, Галина Никитина, Валентина Егорова, Роза Алексе-

ёва тата ыттисем те чирлисене лайăх пăхса хăвăртрах сыватасшăн чунĕçене парса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ — комсомолкăсем, обществăлла ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем больницăра «сестрасен совечĕ» тунă, хăйсен квалификацине ӳстерме занятисем ирттереççĕ, программăпа палăртнă темăсем тăрăх доклачĕсене те хăйсемех тăваççĕ, тухтăрсем вĕсене тĕрĕслесе пыраççĕ кăна.

— Пирĕн пурте вĕренме тăрăшаççĕ, çавă питĕ савăнтарать мана,— тет Галина Ивановна.— Хăшĕсем каçхи вăтам шкула çӳреççĕ, теприсем заочно вĕренеççĕ. Пирĕн конюх та кăçал вуннăмĕш класа куçать! Тата акă мĕн питĕ паха: кунтан ăçта та пулин вĕренме тухса каяççĕ те вĕренсе пĕтерсен пирĕн патах килеççĕ. Çавăнпа та эпир — пĕр çемье пек...

Больницăна пăхăнса тăракан ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсенче ĕçлекенсем хушшинче те лайăх, ĕçре шанчăклă çынсем сахал мар иккен. Вĕсене те ырлать аслă врач, вĕсем пирки чи çывăх тăванĕсем çинчен каласа панă пекех калаçать.

— Хĕрлĕ Çырти сестра Анастасия Голубева кунта çирĕм пĕр çул хушши пĕр

улшăнмасар еçлет. Хăйĕн участокĕнчи кашни çын сывлăхне пĕлсе тăрать вăл. Çавăнпа ăна ĕçлеме те çăмăлтарах...

— Мария Семенова акушерка участокĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ çулталăка çитмен ачасем хушшинче вилекенсем пĕрре те пулман. Иртнĕ çул вăл çĕнĕрен çуралнă хĕрĕх икĕ ачана йышăннă, пурте сывă. Акушерка вĕсене тĕрĕслесех тăрать...

— Юлия Иванова, Кĕтеснерти сестра, Ижевскри фельдшерсен шкулĕнчен заочно вĕренсе тухнă, пит лайăх ĕçлет. Ун пеккисем пирĕн татах та пур!

— Ялсенче ĕçлекенсене епле ертсе пыратăр-ха эсир, мĕнле пулăшатăр вĕсене? Тĕрлĕ çĕрте-çке-ха вĕсем, тата хăшĕсем больницăран чылай инçетре. Кансĕр пуль? — ыйтатпăр эпир.

— Эпир вĕсемпе пĕрмаях тачă çыхăну тытатпăр, — тет аслă врач, — вĕсем патне кайсах тăратпăр. Эпĕ те, ытти врачсем те. Кунсăр пуçне, кашни уйăхрах канашлусем ирттеретпĕр. Унта вĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем тăваççĕ, эпир çав отчетсене пур енчен те тишкерсе тухатпăр, ĕçре пулнă çитменлĕхсене кăтартса паратпăр. Çав канашлусенчех медицинăпа клиника ыйтăвĕсемпе докладсем пулаççĕ, вĕсене врачсем е, вĕсем

ертсе пынипе, фельдшерсем тăваççĕ. Питĕ усăллă пулаççĕ ку канашлусем... Çулсеренех уйрăм темăсем тăрăх 2—3 кунлăх семинарсем ирттеретпĕр — калăпăр ача-пăча чирĕсем пирки, ача çуратнă чух пулăшасси пирки т. ыт. те. Икĕ çулта пĕрре ялта ĕçлекен кашни фельдшер, сестра е акушер пĕр уйăх хушши больницăра, ĕç вырăнĕнче пулать — практика пек ĕнтĕ ку. Тепĕр чух хăшпĕрисене республикăри больницăсене те яма тăрăшатпăр. Кĕскен каласан, пĕрмаях вĕрентсе пыма тăрăшатпăр вĕсене. Кунсăр пуçне, ятарласа кăларнă литература, медицина хаçачĕсемпе журналĕсем вулаççĕ...

— Кун пек кадрсемпе пурăнма пулать! — терĕмĕр эпир.

— Кадрĕсем чăнах та начар мар çав, — килĕшрĕ Галина Ивановна. Унтан кăштах шухăша кайнă пек пулчĕ те: — Хамăр ӳстернĕ кадрсем, — терĕ.

— Çавăнпа шанчăклă та вĕсем...

* * *

Чирлĕ çынна сыватма йывăр. Çынна чирлесрен çăлса хăварма нумай çăмăлтарах...

Çак сăмахсене медицинăра ĕçлекен кашни çынранах илтме пулать. Ку питĕ

тĕрĕс ĕнтĕ, анчах чир-чĕр сарăлассине хирĕç медицина çыннисем хăйсем кăна кĕрешме пултараймаççĕ, ку вăл — пĕтĕм халăх ĕçĕ. Кашни çын хăйĕн пурнăçĕнче санитарипе гигиена науки хушнисене туса пырсан çеç эпир ялан сывă пурăнма, чирсенчен упранма пултаратпăр.

Çавăнпа та халăх хушшинче санитари пĕлĕвĕсене анлăрах сарас пулать, çынсене килте те, ĕçре те тасалăхшăн кĕрешме çĕклес пулать.

Арапусĕнчи участок больницин тухтăрĕсем те, фельдшерĕсемпе сестрисем те, больницăна пăхăнса тăракан медпунктсенче ĕçлекенсем те ку тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеççĕ. Тĕрлĕ чирсенчен епле сыхланасси çинчен, кил-çурта, апат-çимĕçе таса тытмалли т. ыт. çинчен халăх хушшинче вĕсем çулталăк хушшинче çĕршер калаçу ирттереççĕ. Санитари бюллетенĕсем кăлараççĕ, чир-чĕр пирки кĕнекесем вулама пара ççĕ. Тасалăхшăн кĕрешес ĕçе вĕсем комсомол организацисене, шкулсенчи аслăрах классенче вĕренекенсене хутшăнтараççĕ. Кашни медпункт çумĕнчех санитари активĕ пур. Хăшпĕр çĕртете таса пурăнакан килсене вымпелсем памалла тунă.

Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче, Мускавра

пулса иртнӗ Пӗтӗм Союзри медицина работникӗсен канашлӑвӗнчен таврӑнсан, Галина Ивановна хӑй ертсе пыракан участокра ӗҫлекенсене пухса, канашлу итогӗсем ҫинчен, партипе правительство халӑх сывлӑхне сыхлакансем умне мӗн тери пысӑк задачӑсем лартни, малашне мӗнле ӗҫлемелли ҫинчен тӗплӗн каласа кӑтартнӑ. Уйрӑмах, вӑл профилактика ӗҫне вӑйлатмаллине, халӑх хушшинче санитари пропагандине ытларах сармаллине палӑртса, Мускаври канашлу чӗнсе каланинчен пӗр сыпӑка вуласа панӑ:

— Медицинӑра ӗҫлекен кашни ҫын халӑх хушшинче санитари пӗлӗвӗсем сарассине хӑйӗн чи хисеплӗ тивӗҫӗ тесе шутламалла...

Шӑп ҫав кунсенче ӗнтӗ больницӑра ӗҫлекенсем коммунизмла ӗҫлекен коллектив ятне илессишӗн кӗрешме калаҫса татӑлнӑ. Ҫавӑн чух йышӑннӑ обязательствӑсем халӗ ӑнӑҫлӑнах пурнӑҫланаҫҫӗ.

Ку пархатарлӑ кӗрешӗве аслӑ врач пуҫарнӑ, вӑлах ӑна куллен ертсе пырать...

* * *

Ку чухнехи тухтӑр —хулара ӗҫлет-и вӑл, ялта-и, пурпӗр,—пысӑк культурӑллӑ ҫын пулмалла. Пирӗн вӑхӑчӗ ҫавӑн пек — наука калама ҫук хӑвӑрт

малалла каять, медицинăри ученăйсем чирсемпе кĕрешмелли çĕнĕрен çĕнĕ меслетсем, çĕнĕ эмелсем тупаççĕ, ку таранччен этемлĕхшĕн çав тери хăрушă пулнă чирсене те парăнтараççĕ. Çавăнпа та тухтăрăн «авалхи багажпа» пурăнма çук, унăн пĕрмай, кашни кун вĕренес пулать.

Галина Ивановна вĕренет. Юлашки çулсенче вăл темиçе хут та пысăк хуласенчи клиникăсенче, курссенче пулнă. Анчах ку çителĕксĕр. Вăл кашни пушă самантрах вулать. Унăн темĕн пысăкăш библиотека. Унта медицина кĕнекисемпе журналĕсем кăна мар, политикăлла тата ытти йышши литература та сахал мар.

Уйрăмах, пире унăн библиотекинче илемлĕ литература нумаййи тĕлĕнтерчĕ. Вырăссен тата хĕвеланăçĕнчи классиксем, хальхи писательсем... Темĕн тĕрлĕ журнал тата — «Октябрьпе» «Неваран» пуçласа Украина писателĕсем кăларакан «Витчизна» таранах пур.

— Хăçан вулама ĕлкĕретĕр эсир ку журналсене? Сирĕн пĕрре те вăхăт çук вĕт-ха?

— Хĕллехи каçсем вăрăм, — кулса илет Галина Ивановна. — Уйрăмах ялта вăрăм пулаççĕ вĕсем. Кунта пире валли театрсемпе филармонисем çук вĕт! Çит-

меннине... илемлĕ литературăсăр пурăнаймастăп эпĕ. Тепĕр чух манăн хамăнга çырас килсе каять, — хĕрелсех илет вăл.

— Çырас пулать, пурнăçра эсир çынсене каласа кăтартмалли япаласем нумай курнă...

Тултан 10—12 çулхи хĕрачапа 7—8 çулхи арçын ача кĕреççĕ. Питçăмартисем иккĕшин те хĕп-хĕрлĕ, хытă вылянă пулмалла.

— Анне, пирĕн çиес килет!— терĕ арçын ачи хывăннă-хывăнман.

Ку пире тĕлĕнтерет. Мĕншĕн ачасем ăна «анне» теççĕ? Анчах эпир тĕлĕннине çавăнтах Галина Ивановна амăшĕ асăрхать те, кăмăллăн кулса, хуллен пĕлтерет:

— Усрав ачасем вĕсем пирĕн. Галя икĕ тăлăха ӳстерет... Арçын ачи Галя унăн амăшĕ маррине те пĕлмест, эпир ăна ача çуртĕнчен вăл утайман чухнех илнĕ...

Çакăн çинчен пĕлсен, Галина Ивановнăна пирĕн тата ытларах хисеплес килсе кайрĕ. Авă мĕн тери ырă çын иккен эсĕ, республикăн тава тивĕçлĕ врачĕ, халăх тусĕ!.. Хаяр вăрçа пула санăн хăвăн çемье пулса çитеймен — мăшăру вилнĕ, хăвăн шăпуна эсĕ тек никампа та

çыхăнтарасшăн пулман, пурпĕрех ачасем ÿстеретĕн, вĕсемпе телейлĕ пуласшăн. Мĕн тери ырă тĕслĕх ку хăшпĕрисемшĕн!..

Эпир калаçса ларнă вăхăтра сасартăк санитарка чупса пычĕ.

— Галина Ивановна, йывăр чирленĕ çын илсе килчĕç! Кăшкăрсах йынăшать, пĕр самант та лăпкă выртма пултараймасть. Сире чĕнеççĕ...

Тепĕр минутранах Галина Ивановна хăвăрт тумланса тухса кайрĕ.

— Çавăн пек пирĕн Галя пурнăçĕ, — терĕ амăшĕ Елена Владимировна, хĕрé хыççăн пăхса юлса. — Тепĕр чух çĕр варринчех чĕнсе каяççĕ те, тул çутăличчен таврăнаймасть, анчах ирхине каллех ĕçре пулас пулать. Çапах та — вăл ÿпкелешнине илтмен эпĕ. Кăмăлĕ çирĕп унăн...

Кунта пирĕн Елена Владимировна çинчен те темиçе ырă сăмах каласа хăварас килет. Çитмĕл виçĕ çула çитнĕ пулсан та, çирĕп карчăк-ха вăл. Хăй ĕмĕрне ачасене вĕрентсе ирттернĕ. Революциччен гимнази кăна пĕтернĕ, анчах кайран, Совет влаçĕ вăхăтĕнче, ачисем ÿссе çитсен, хăй калашле «алăсем салтăнсан», малалла вĕренме шут тытнă. 1939 çулта вара,

аслă хěрě Галина мединститутран вěренсе тухнă çул, вăл та пединститут заочно пěтерсе диплом илнě. Вăрçă çулěсенче çак ватă украинка Етěрнери педтехникумра чăваш ачисене вěрентнě. 1946 çулта партине кěнě. Халě Елена Владимировна — пенсионерка, анчах пěрре те ěçсěр пурăнасшăн мар.

— Емěр тăршшипех халăх хушшинче пулнă та, пуçăм ěçленě чух, урасем утнă чух епле-ха килте ним тумасăр пăнтăхса ларатăн? — тет вăл.

Паллах, ăна ěçлеме чаракан çук. Хěллěхи вăхăтра Елена Владимировна сестрасен политкружокне ертсе пырать, парти историне вěрентет, çуллахи вăхăтра вăл — больницăри «чечек хуçалăхěн» пуçлăхě. Усрава илнě икě ачана йěркеллě пăхса, вěсене вěренме пулăшса пыни те питě пархатарлă ěç ěнтě. Сăмах майěн каласан, эпě чылай пенсионерсене çак хастарлă карчăкран пример илме сěнěттěм...

* * *

ÇАВ каçхине Галина Ивановна тата тепěр çын пурнăçне çăлса хăварнă — инçетри ялтан илсе пынă колхозникăн пÿрлě аппендицит пулнă, вăл шăтса кайса шалалла юхма тытăннă. Çийěнчех опера-

ци тумасан, çав çын кĕçĕрех вилсе кайма пултарнă. Анчах кун çинчен аслă врач пире ытахальтен кăна, нимех те пулман пек çеç каласа кăтартрĕ. Хăнăхнă ĕç ĕнтĕ, мĕн калăн!

Ирхине вăл пире пĕтĕм больницăпа унăн хуçалăхне кăтартса çӳрерĕ. Эпир чирлисене йышăнакан пӳлĕмсенче, палатăсенче, кухньăра, электростанцинче, гаражра пултăмăр. Пур çĕрте те йĕркелĕх, хуçа куçĕ пурне те çирĕп сăнаса тăни курăнать. Çавăн чухнех тата эпир кунта ĕçлекенсем те, больницăна сывалма пынисем те аслă врача питĕ хисепленине асăрхарăмăр. Кашниех ун çине ăшă кăмăлпа пăхать, ăна чун-чĕререн сывлăх сунать.

...Çакна тивĕçлĕ çав вăл, мĕншĕн тесен Галина Ивановна хăйĕн вăйне, пĕлĕвĕсене, хастарлăхĕпе пултарулăхне пĕтĕмпех çынсен сывлăхне упрас ĕçе парать. Вăл— халăхăн пысăк тусĕ.

## ТУПМАЛЛИ

Вĕри чĕре, ылтăн алăсем . . . . . . 3
Телей тимĕрçисем . . . . . . . . 26
Вагонсем илемленсе тухаççĕ . . . . . 47
Халăх тусĕ, тухтăр . . . . . . . . 58

**АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ**
**О ЛЮДЯХ ХОРОШИХ**
Чувашгосиздат, 1961 г.
(Люди семилетки. Серия очерков. Вып. 2).
На чувашском языке
Художник **Э. Юрьев.**
Редактор **Н. Григорьев.**
Худож. редактор **Н. Кириллов.**
Техн. редактор **Г. Петров.**
Корректор **Н. Иванов.**

НТ 00037. Сдано в набор 29/VIII-1961 г.
Подписано к печати 30/IX-1961 г. Тираж 2500 экз.
Изд. № 84/1 Формат 60×84 1/32. Объем 2,51. печ л.
Учетно-изд. 2,2. Заказ № 1342. Цена 7 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, д. № 5.

20. e K

Цена 7 коп.